ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
27
ЭРНЕКУН
№ 231 (9140)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).

Хамăр республикăра (1 стр.).

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсем (1 стр.).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Чăваш АССР Верховнăй Советне пухасси çинчен (1 стр.).

Районсенчи парторганизацисен конференцийĕсем (2 стр.).

Н. Семенов.—Пропаганда ĕçĕн идейăлла шайне ӳстерессишĕн (2 стр.).

П. Романов.—Кузбаса килĕр (2 стр.).

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ. Жолио-Кюри 1953 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессине уçнă чухне каланă сăмах (3 стр.).

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи суту-илӳ çинчен (4 стр.).

С. Аслан.—Хаçат-журнал сарасси мĕншĕн çителĕксĕр пырать?

КАПКАН КĔТЕССИ: **П. Крысин.**—Çырусем килеççĕ, министр сĕтелне питĕрнеççĕ...; **Чĕрĕп Куçми.**—Мунчара (4 стр.).

Хĕллехи спорт сезонĕ

Хĕлле пулчĕ. Пирĕн Тăван çĕршывăн анлă уй-хирĕсемпе вăрманĕсенче шурă юр выртать, юханшывсемпе кӳлĕсем пăрпа витĕнчĕç. Конькипе тата йĕлтĕрпе ярăнакансем кулленех нумайланса пыраççĕ. Хоккеистсен малтанхи тĕлпулăвĕсене иртернĕ.

Халăхăн йышлă массисене спорт ăмăртăвĕсене хутшăнтарма хĕллехи вăхăтра анлă майсем пур. Пирĕн çĕршывра питех те анлă сарăлнă спорт вăййисене—йĕлтĕрпе, конькипе ярăнассине, хоккей вăййине, конькипе фигурăсем туса ярăнассине аталантарма уйрăмах лайăх майсем пулса тăчĕç.

Спорт тахçантанпах совет çыннисен йăлине кĕнĕ. Пирĕн çĕршывра физкультурăпа спорт ĕççыннисене коммунизмла воспитани памалли, ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен вăйлатмалли тата сывлăха çирĕплетмелли чи кирлĕ майсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Пирĕн çĕршывра пур тĕрлĕ профессипе пурăнакан арçынсемпе хĕрарăмсемшĕн те, çамрăксемпе ваттисемшĕн те, шкул ачисемшĕн те физкультурăпа спорт занятийĕсене хутшăнма лайăх условисем туса панă. Стадион, шывра ишмелли станци, спорт площадки тата каток халĕ хуласенче çеç мар, кашни район центрĕнчех тата колхозлă нумай ялсенче пур.

Совет çыннисем физкультурăпа тата спортпа ытларах та ытларах интересленнĕ май массăлла спорт ĕçне анлă сарма тата та лайăхрах майсем пулса тăраççĕ. Чăваш республикинчи физкультура организацийĕсен çак хĕлре йĕлтĕрпе тата конькипе ярăнма çĕнĕрен пиншер çынсене явăçтарас пулать, вĕсене пĕрремĕш степень тата иккĕмĕш степень ГТО нормисене пама йышлăнрах хутшăнтармалла. Çакна шута илес пулать: Чăваш республикинчи йĕлтĕрпе чупакансен, фигуристсен, сăртлă вырăнсенче йĕлтĕрпе сӳрекенсен тата йĕлтĕрпе ярăнакансен ăсталăхĕ спортăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш разрячĕсен шайĕнче çеç-ха. Çакă вара республикăри физкультура организацийĕсемпе спорт обществисен, профсоюз тата комсомол организацийĕсен руководителĕсене хуласенчи, район центрĕсенчи тата ялсенчи физкультура коллективĕсене, спорт ăсталăхне вĕрентекен организацисене тĕреклетес ĕç çине тимлĕн пăхма хушать.

Шупашкарти, Улатăрти, Канашри, Етĕрнери физкультура коллективĕсем чылайăшĕ хĕллехи спорт сезонне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Вĕсем спорт хатĕрĕсем вăхăтра туянчĕç, хĕллехи спорт вăййисен календарьне туса çирĕплетрĕç, йĕлтĕрпе сӳрекенсен тата конькипе чупакансен тренировкисене тăтăшах иртерессĕ.

Шупашкарта «Спартак» спорт обществин йĕлтĕрçисем тата хоккейсчĕсем йĕлтĕрпе тата конькипе лайăхрах ярăнма хăнăхма вăхăтра тытăнчĕç. «Динамо», «Искра» спорт обществисен тата аслă шкулсенчи йĕлтĕрçĕсем малтанхи тренировкăсене иртерчĕç. Анчах хĕллехи спорт сезонне лайăх организацилесе иртерес ĕçе хăшпĕр çĕрте хакламаççĕ-ха. Республикăри чылай хуласемпе ялсенче физкультурниксен коллективĕсенчен нумайăшĕ хĕллехи спорт сезонне организацилес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ: катоксем тумаççĕ, йĕлтĕрсем туянмаççĕ, йĕлтĕрçĕсене тата конькипе чупакансене ăсталăха ӳстерме пулăшмаççĕ.

Улатăрта, Канашра, Çĕмĕрлере катоксемпе йĕлтĕр базисем ĕçлеме тытăнман. Ĕç çапла тăнине йĕркеллĕ тесе шутлама пулать-и? Паллах ĕнтĕ, çакна ĕç йĕркеллĕ пырать тесе шутлама çук Шăхасан, Етĕрне тата Тăвай районĕсенчи колхозсемпе МТС-сенчи физкультура коллективĕсем нумайăшĕ хĕллехи спорт енĕпе халиччен те секцисем туман. Çав районсенче ГТО значкисĕ пулма кăçал пĕр çынна та хатĕрлемен.

Хĕллехи спорт календарĕнче спорт ăмăртăвĕсем нумай иртерме палăртнă. Пĕр-пĕр спорт енĕпе колхозра, районта, обществăра тата республикăра мала тухассишĕн пулмалли ăмăртусене физкультурниксене нумайрах хутшăнтарма тата вĕсене спорт техники тĕлĕшĕнчен çӳлĕ шайра иртерме халех тимлĕн тăрăшса хатĕрленес пулать. Çав шутпа йĕлтĕрçĕсен тата конькипе чупакансен тренировкисене тăтăшах иртермелле. Унсăрăн ăмăртăва массăсене йышлăн хутшăнтарма, пирĕн спортсменсен ăсталăхне ӳстерме май çук.

Иртнĕ çулсенче республикăра йĕлтĕрпе ярăнас енĕпе пулнă ăмăртусенче «Урожай», «Красная звезда», «Локомотив» спорт обществисен, Куславкка, Вăрнар, Пăрачкав, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр районсенчи физкультурниксем спорт техникине начар пĕлни палăрчĕ, вĕсем ăмăртусенче кайри вырăнсене йышăнчĕç. Асăннă обществăсемпе районсенче çамрăк спортсменсене вĕрентес, тренировкăсем иртерес ĕçе начар организациленĕ пирки çавăн пек пулнă та ĕнтĕ.

Спорта вĕрентес ĕçе организацилеме материальнăй никĕсе тĕреклетес ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать. Спортсменсем валли лайăх йĕлтĕрсемпе конькисем хатĕрлемесен, вĕсен спорт техники тĕлĕшĕнчи результачĕсене ӳстерме çук. Республикăри суту-илӳ организацийĕсен те физкультурниксем валли хĕллехи спорт хатĕрĕсем, атă-пушмак тата костюмсем кӳрсе килме сахал тăрăшаççĕ. Магазинсенче йĕлтĕрсем, йĕлтĕрпе сӳремелли костюмсем сутмаççĕ пулсан, çавна текех тӳссе пурăнма май çук.

Иртнĕ хĕлле ялсенче спорт ĕçне начар организациленĕччĕ. ГТО значкисчĕсемпе спортсмен-разрядниксем хатĕрлес тĕлĕшпе государство панă заданисене нумай районсем пурнăçламарĕç. Йĕлтĕрхи çитменлĕхсен кăçал та, çак хĕлре те, ан пулччăр тесе васкавлă та татăклă мерăсем йышнас пулать. Районсен сывлăх пайĕсемпе комсомол райкомĕсем ялти ĕççыннисене физкультура енĕпе воспитани парас ĕçе лайăхлатма тивĕçлĕ. Физкультура коллективĕсене тĕреклетес тата çĕнĕ коллективсем тăвас тĕлĕшпе уйрăмах хытă тăрăшас пулать. Колхозсенче ГТО значокĕ илмелли нормăсене парас ĕçе анлă сармалла.

Спорт обществисем тата промышленноçăн пысăк предприятийĕсемпе шкулсенчи физкультурниксен коллективĕсем колхозлă ялта массăлла физкультурăпа спорт ĕçне анлă сарма пур майсемпе те пулăшма тивĕçлĕ, колхозсемпе МТС-сенче кăтартуллă спорт вăййисем иртерме чи лайăх спортсменсене, тренерсене ярас пулать, спорт ăмăртăвĕсем иртерме пулăшас пулать.

Спорт обществисен руководителĕсемпе сывлăха сыхлас ĕç органĕсен хĕллехи вăхăтра ĕççыннисене спорт вăййисене хутшăнтарас тĕлĕшпе пур ĕçсене те тăвас пулать. Катоксемпе лайăххах усă курмалла. Йĕлтĕр станцийĕсем нумайрах усмалла. Ĕççыннисем ярăнма йĕлтĕр пама ыйтсан, вĕсене çийĕнчех йĕлтĕр тупса пама май килтĕр.

Предприятисенчи, колхозсенчи тата МТС-сенчи парторганизацисен физкультура организацийĕсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла, вĕсене ытларах пулăшмалла. Çамрăксене физкультурăна вĕрентесси—кашни парторганизацишĕн пысăк та ответлă ĕç.

Хĕллехи спорт сезонне пур енчен те лайăх иртересси, хĕллехи спорта хуласемпе ялсенчи ĕççыннисене нумайрах хутшăнтарасси Чăваш республикинчи физкультурниксен хальхи вăхăтри чи пысăк задачи пулса тăрать.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕТНЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессине 1953 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн
Д. МИТЬКОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕ.

„Агитатор блокночĕн“ черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 22-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Унта ССР Союзĕн Конституци кунĕ çинчен каласу иртермелли материал, П. Трофимовăн «Халăх хуçалăхĕ валли йывăç ытларах хатĕрлер» ятлă статьи, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлени колхозра мĕнле пурнăçласа пыни çинчен Шупашкар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Н. С. Хабаров юлташ каласа пани пичетленнĕ.

Каласура усă курма халăх демократи çĕршывĕнче ĕççыннисен пурнăçна культура шайĕ ӳсе пынине кăтартакан цифрăсемпе фактсем пур.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Çулталăкри плана тултарнă

СТАЛИНО, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян 40-мĕш номерлĕ «Кураховка» шахтăри горняксем («Красноармейскуголь» тресчĕ) 1953 çулхи план шучĕпе юлашки тонна кăмрăк кăларнă. Кун çинчен вĕсем Кузбасри «Черная гора» шахтăри горняксем патне телеграмма ярса пĕлтернĕ. Çак икĕ шахтăри горняксем пĕр-пĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

«Сталинуголь» комбинатри 11 предприяти коллективĕсем халĕ ĕнтĕ 1954 çулхи план шучĕпе çĕр кăмрăкĕ кăлараççĕ.

Область Совечĕн сессийĕ МТС ĕçĕсем çинчен

КУЙБЫШЕВ (ТАСС). Ĕççынни депутачĕсен область Совечĕн çак кунсенче пулса иртнĕ сессийĕ Больше-Глушицки тата Узюковски машина-трактор станцийĕсен ĕçĕсем çинчен сӳтсе явнă.

Машина-трактор станцисен директорĕсем механизаторсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановление пурнăçлассишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа панă.

1954 çулта вăйлă тырпул туса илме машина-трактор станцийĕсен колхозсенче хĕллехи тата çуркуннехи агротехникăлла ĕçсен комплексне пурнăçламалла. 17 пин гектар çинче юр тытса хăварма палăртнă. Çуркунне вăрлăхсене нумай яровизацилеме, çуртырисене хĕреслĕ майпа тата ансăр ретпе акма, çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартма йышăннă. Вылăх-чĕрлĕх фермисенче йывăр ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тума тытăннă.

Ялхуçалăхĕ валли—электродвигательсем

ХАРЬКОВ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС) Кунти электротехнически завод туса кăларакан электродвигательсемпе машина-трактор станцийĕсен мастерскойĕсенче, вылăх-чĕрлĕх фермисенче, Заготзерно пункчĕсенче усă кураççĕ. Кун пек двигательсемпе молотилкăсене, сурăх çăмне касмалли машинкăсене ĕçлеттереççĕ.

Кăçалхи çул предприятин çĕршыври ялă районсем валли 20 пин ытла электродвигатель туса памалла. Производствăри новаторсем техникăна çĕнетмелли майсем нумай тупнă, ĕçе çĕнĕлле йĕркеленĕ. Литейнăй цехра ĕç тухăçлăхĕ иртнĕ çулхинчен 12 процент ӳснĕ.

Çĕнĕ технологие пурнăçланă май завод 11 уйăхри программăна пурнăçланă, халĕ декабрьти план шучĕпе продукци туса кăларать.



Каменецк-Подольск облаçĕ. Городок районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз вылăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма лайăх хатĕрленнĕ. Строительство бригади кăçал ĕне вити тата 250 тонна кĕмелĕх силос башни туса пĕтерне. Чăх-чĕп вити тата механизациленĕ кормокухня туса пĕтереççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хрущев ячĕпе тăракан колхозăн ĕне вити тата силос башни.

В. ПРИХОДЬКО фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Смоленскри йĕтĕн комбиначĕ

СМОЛЕНСК. (ТАСС). Смоленскри йĕтĕн комбиначĕ пысăк çĕр лаптăкĕ йышăнса тăрать. Комбинатăн пилĕ пысăк корпусĕсен пĕр вĕсĕнче çип арлакансемпе пир тĕртекенсем станоксене ĕçлеттереççĕ, продукци туса кăлараççĕ, тепĕр вĕсĕнче вара — строительсемпе монтажниксем хăйсен ĕçне тăваççĕ. Сӳс тасатакан, арлакан тата пир тĕртекен фабрикăсем продукци туса кăларма пуçланă. Анчах кунта та монтажниксем ĕçленине час-часах курма пулать. Вĕсем çĕнĕ оборудовани вырнаçтарса лартаççĕ.

Смоленскри йĕтĕн комбиначĕ—пир-авăр промышленноçĕн пысăк предприятийĕ. Унта пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен çĕнĕ оборудовани вырнаçтарса лартаççĕ. Фабрикăсенче автоматла ĕçлекен пир тĕртмелли станоксем, ăса йĕри-тавра çавăрнакан машинăсем, хăвăрт ĕçлекен лентăлла машинăсем тата ыттисем те ĕçе кĕнĕ. Вентиляци системине вырнаçтарса лартма пуçланă, вĕсене цехсене кирлĕ пек температурăллă тата кирлĕ пек нӳрĕ таса сывлăш парса тăма тăваççĕ.

Çав вăхăтрах пурăнмалли çуртсем лартаççĕ. Днепр хĕрринче тата хула варринче те пир-авăр тĕртекенсене валли нумай хутлă çуртсем тăваççĕ.

Йĕтĕн комбиначĕ 1953 çулта продукци туса кăлармалли плана тултарса çитернĕ.

МТС работникĕсене кивçен укçа парса пулăшаççĕ

СССР Ялхуçалăх банкĕ кашни çулленех колхозсемпе колхозниксене кивçен укçа парса пулăшать. Ялхуçалăх артелĕсем вылăх-чĕрлĕх витисем тума, фермăсенчи ĕçсене механизацилеме, шурлăхсене типĕтме, электростанцисем лартма, овощехранилищĕсем, сушилкăсем, парниксем, теплицăсем, хуçалăхра кирлĕ ытти çуртсем тума нумай вăхăтлăха кивçен укçа илеççĕ.

Кунсăр пуçне, ялхуçалăх банкĕ 1954 çулта машина-трактор станцисенчи работниксене, инженерсемпе техниксене тата служащисене хăйсене валли пурăнмалли çуртсем лартма укçа кивçен парса пулăшать. Çакна валли 450 миллион тенкĕ уйăраççĕ. Машина-трактор станцийĕсен работникĕсем 12 пин тенкĕ таран вунă çуллăха кивçен илме пултараççĕ. Вĕсем кивçен илнĕ укçана, виççĕмĕш çулĕнче тӳлеме пуçласа, 8 çул хушшинче пĕр пек пайăн тӳлесе татма пултараççĕ.

(ТАСС).

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

Пĕтĕмсоюзлă Хатĕрлев министерстви туса хурасси çинчен

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тата вĕсенчен тĕрлĕ продуктсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен организацийĕсемпе предприятисен никĕсĕ çинче Пĕтĕмсоюзлă Хатĕрлев министерстви туса хурас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль.
1953 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

Л. Р. Корниец юлташа СССР Хатĕрлев министрĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Леонид Романович Корниец юлташа СССР Хатĕрлев министрĕ пулма уйăрса лартас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль.
1953 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕнче

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăннă:

Пĕтĕм союзлă Хатĕрлев министерстви туса хунă май, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине малашне СССР Ялхуçалăх министерстви, тесе ят парас.

Çĕнĕ спорт сооруженийĕсем

Пирĕн çĕршывра профсоюзсем пин ытла стадион, йĕлтĕр базисем икĕ пине яхăн, шыв станцийĕсем, шывра ишмелли бассейнсем, трамплинсем, кортсем çĕршер уçнă тата вуншар пин спорт площадкисем тунă.

Нумай хуласенче халĕ çĕнĕ спорт сооруженийĕсем тăваççĕ. Мускавра «Сталинец» стадионра хĕллехи вăхăтра теннисла вылямалли корт туса пĕтернĕ. Çак корта «Шахтер» спорт обществи тутарнă. Столицăра çамрăк пионерсен стадионне çĕнĕтсе тăваççĕ, футболла вылямалли вырăна, ăмăртса чупмалли çула, трибунăсене туса пĕтернĕ. Халĕ кунта физкультурниксен çуртне туса пĕтереççĕ. Çитес çулта çак стадионра çуллахи каток тума палăртнă.

Ленинградра велосипедпа чупмалли стадион тума пуçланă. Стадион трибунисем 5.500 çын вырнаçмалăх пулаççĕ тата велосипедсене усрамалли павильон пулать. Харьков хулинче «Красное знамя» спорт обществин физкультура çуртне туса пĕтереççĕ. Виçĕ хутлă çуртра спорт залĕсем иккĕ, секцисем ĕçлемелли пӳлĕмсем тата душ пӳлĕмĕсем пулаççĕ. Физкультура çуртĕпе юнашарах волейболла тата теннисла вылямалли площадкăсем тата ăмăртса чупмалли çулсем тăваççĕ.

Алма-Ата хулинче машиностроительсен стадионне тăваççĕ. Стадион трибунисем 10 пин вырăнлă. Якутск хулинче, Лена юханшывĕ хĕрринче, «Медик» спорт обществи стадионне тăваççĕ. Краснодонра тата Бовово-Антрацитра, (Ворошиловград облаçĕ), Астраханьре, Саратовра, Ужгородра стадионсем туса пĕтереççĕ. Рига, Таллин, Майкоп тата ытти хуласенче те профсоюзсен çĕнĕ спорт сооруженийĕсене тума тытăннă. (ТАСС).

Металлургсен çитĕнĕвĕ

ЗАПОРОЖЬЕ. (ТАСС). «Днепроспецсталь» заводри металлургсем 11 уйăхри производство планне пурнăçланă. Декабрьти план шучĕпе пиншер тонна хурçă тата çĕршер тонна прокат туса кăларнă.

Заводри хурçă шăратакансем султалăк пуçланнăранпа 4.250 хут хурçă хăвăрт шăратса кăларнă, темиçе миллион киловатт-сехет электроэнерги перекетленĕ.

Планран ирттерсе

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод коллективĕ иртнĕ уйăхри производство планне ăнăçлă тултарчĕ.

Вагонсене пухма хатĕрлекен цех чылайăранпа юлса пыратчĕ. Социализмла ăмăртăва анлă сарса, шалти-резервсемпе усă курса, цех иртнĕ уйăхри плана ирттерсе тултарчĕ. Цеха завод дирекцийĕпе профсоюз комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă.

Тимĕрçĕ цехĕ 11 уйăхри плана срокчен тултарчĕ. Ку цех запаслă пайсем планран ирттерсе 120 тонна туса начĕ.

ХАМĂР РЕСПУБЛИКĂРА

Çĕрпӳ МТС-ĕн мастерскойĕнче тракторсемпе ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: токарь А. В. Киселев,—вăл кулленхи задание 120—130 процент тултарса пырать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Парти чĕннипе

КАНАШ. Партипе правительство ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе лартнă задачăсене пурнăçлас ĕçе хутшăнас ĕмĕтпе вагонсем юсакан заводри çамрăксем колхозсенче ĕçлеме каяççĕ.

Вагонсем пухакан цехри слесарь Н. Сергеев юлташ колхозри электростанцинче механик пулса ĕçлеме вĕренме кайрĕ. Урапасем пухакан цехри слесарь Р. Дмитриев юлташ Канашри механизаторсен шкулĕнче вĕренме кăмăл турĕ.

И. ЖУРАВЛЕВ.

* * *

Ĕç хăвăртлăхĕ ӳсет

Улатăрти вăрманпромхозри Соловьевски автоçул çинче ĕçлекенсем кĕркуннепе хĕллехи сезонра йывăç турттармалли плана срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Автоçул коллективĕ Октябрь уйăхĕнчи плана пилĕк кун маларах тултарнă, уйăх вĕçлениччен виçĕ пин кубометр ытла йывăç турттарнă. Уйрăмах И. Федосеев, А. Измайлов шоферсем кăтартуллă ĕçлеççĕ, вĕсем сменăри задание 170—180 процент таран пурнăçлаççĕ. А. Морозов, А. Ховрин, А. Гнусарев шоферсем те лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсем халĕ çулталăкри плана срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Крановщиксемпе грузчиксем те сменăри задание тăтăшах ирттерсе тултараççĕ. Çапла Изиндеев, Рыбаков крановщиксем октябрь уйăхĕнче çĕршер кубометр йывăç тиенĕ, халĕ çитес çул шучĕпе ĕçлеççĕ.

Автоçул çинче ĕçлекенсем тăваттăмĕш кварталта йывăç турттармалли плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

Н. КОЛЕСОВ.

Тăрăшса вĕренеççĕ, тухăçлă ĕçлеççĕ

ПĂРАЧКАВ. Машина-трактор станцийĕ çумĕнче КПСС историне вĕренмелли кружок ĕçлет. Унта чылай механизаторсем тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕренӳре уйрăмах А. Рязанов тракторист, Ю. Куренков, Н. Федотов нормировщик, А. Сенякин токарь тата ыттисем те лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсем вĕренӳре те, ĕçре те малта пыраççĕ. Хăшпĕр работниксем вăтам е аслă шкулсенче заочно вĕренсе хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ. С. Лазарев бухгалтер Горькири институтра, МТС механикĕ А. Тюшкин—Молотоври ялхуçалăх техникумĕнче заочно вĕренеççĕ.

МТС работникĕсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе кунта час-часах лекцисемпе докладсем пулаççĕ. Машина-трактор станцийĕнче ĕçлекенсем хăйсен пĕлĕвне ĕçпе сыхăнтарма, тухăçлă ĕçлеме пĕлеççĕ. Акă М. Наумов комбайнер хăйĕн техникăлла пĕлĕвне ӳстерсе пырса социализмла ăмăртура темиçе çул хушши ĕнтĕ малта пырать. Вăл «Сталинец-6» комбайнпа ĕçлесе, кăçал 472 гектар вырнă, 5.413 центнер тырă çапса илнĕ.

Стахановла ĕçлесе М. Наумов пĕр уйăхрах 2.770 тенкĕ укçа, 1.223 килограмм тырă илнĕ. Çавăн пекех А. Анисимов юлташ 2.557 тенкĕ укçа, 913 килограмм тырă, Н. Столяров комбайнер — 2.123 тенкĕ укçа тата 889 килограмм тырă илнĕ. Унсăр пуçне вĕсене, машинăсене лайăх тытнăшăн, укçа тата тырă панă.

Стахановла ĕç укçи механизаторсене тулăх та культурăллă пурăнма май парать. Чылай комбайнерсем кăçал культура таварĕсем—музыка инструменчĕсем, радиоприемниксем туянчĕç, килти библиотекăсене пуянлатрĕç.

(Хамăр информаци).

РАЙОНСЕНЧИ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔСЕМ

ЧКАЛОВСКИ

Районти парторганизацийĕн VII-мĕш конференцийĕнче КПСС райкомĕн ĕçĕсем çинчен райкомăн пĕрремĕш секретарĕ П. Тимофеев юлташ доклад туса пачĕ.

Районти парторганизаци, ĕççыннисене партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене тата социализмла ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсене пурнăçлама мобилизацилесе, колхозсен обществăлла хуçалăхĕнче хăшпĕр çитĕнӳсем тунă.

Фермăсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Вăрçăччен-хи 1940 çулхипе танлаштарсан, районти колхозсенче мăйракаллă шултра выльăхсем 298 процент, ĕнесем—181 процент, сыснасем—637 процент, сурăхсем—350 процент, чăх-чĕп—617 процент шутланаççĕ.

Район юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство плавне ăнăçлăн тултарса пырать.

Районти колхозсем кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлерĕç, вăрлăх çитеçлĕ хывнă, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ тата выльăхсем валли витесем çителĕклĕ тунă. Районти колхозсем кăçал силос хывмалли плана 113 процент тултарнă.

Анчах ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăсене пурнăçласси районта çителĕксĕр пулса пырать.

Чылай колхозсем кая юлса пыраççĕ, ун пек колхозсенче ĕç ресурсĕсемпе туллин усă курассине йĕркелемен. «Путь Ленина», «Герой», «Пламя Октября» колхозсенче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ ытла та пĕчĕккĕ.

Тырпул акса тăвас ĕçре хăшпĕр çитĕнӳсем пур пулин те, çитменлĕхсем пысăк-ха. Районти хăшпĕр колхозсем ытла пĕчĕк тухăçлă тырпул туса илеççĕ. «Путь Ленина», «Правда», «Первомайск», «Красное знамя», «Кзыл юлдуз» колхозсем кăçал пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем гектартан 10 центнертан кая мар пухса илчĕç.

Докладчик тата прение тухса калакансем чылай колхозсем мĕншĕн юлса пынине палăртса, паха сĕнӳсем пачĕç.

— Пирĕн колхозра ĕç дисциплинине пăсма районти предприятисемпе учреждениесен руководителĕсем хăйсем пулăшаççĕ,— тет «Путь Ленина» колхозри парторганизаци секретарĕ В. Полякова делегат.— Вĕсем колхоз правленийĕнчен ыйтмасăрах артель членĕсене хăйсем патне ĕçлеме илеççĕ. Тырпул пухса кĕртес ĕç хĕрсе пынă вăхăтра райсовет исполкомĕ пирĕн колхоз членĕсене 10 сынна хăйĕн уттине çулнă çĕрте ĕçлеттерчĕ.

КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозсене начар ертсе пыни çинчен Д. Васильев делегат каларĕ.

— КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн уполномоченнăйĕсем е работникĕсем колхозсене ячĕшĕн çеç пыраççĕ,— терĕ Д. Васильев юлташ.—Акă, кăçал тырпул пухса кĕртес умĕн пирĕн колхоза КПСС райкомĕпе район Совет исполкомĕнчен Ласточкин, Данилов, Алексеев юлташсем тырпул пухса кĕртме колхоз мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме пычĕç. Эпĕ вĕсем пысăк пулăшу парасса кĕтнĕччĕ. Анчах та нимĕнле пулăшу та пулмарĕ. Асăннă юлташсем 2—3 сехет хушшинче уя тухса кĕчĕç те нимĕнле кăтартусем памасăрах каялла кайрĕç. Паллах, колхозсене çак меслетпе «ертсе пыни» пире усă памасть.

М. Ишмуратовпа А. Каштанов делегатсем КПСС райкомне кадрсене суйласа илес, ĕçе вырнаçтарас, воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн хытă критиклерĕç.

— Районти вăрманпромхоз директорĕ И. Максимов юлташ,— терĕ А. Каштанов юлташ,— хăйĕн ĕçне ытла та начар туса пырать.— Ун çинчен иртнĕ конференцире те каланăччĕ. Анчах та ĕçе юхăнтарса янă И. Максимов вырăнне лартма КПСС райкомĕпе район Совет исполкомĕ урăх çын тупаймаççĕ. Кун пек тĕслĕхсем тата та нумай. КПСС райкомĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлет.

Районти предприятисемпе артельсем туса кăларакан таварсен шучĕпе пахалăхĕ ĕççыннисен пайăнхи ыйтăвĕсене палах тивĕçтермест. Уйрăмах ку тĕлĕшпе «Мотор» промысла артелĕ çителĕксĕр ĕçлет.

Районта ĕççыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтересси чылай лайăхланчĕ пулин те, ку тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Медицина работникĕсем халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Пурне те çичĕ çул вĕрентмелли закон та начар пурнăçланать. Иртнĕ çул, çавăн пекех кăçал та, шкул çулне çитнĕ ачасенчен хăшпĕрисем шкул тулашне тăрса юлнă. Суту-илӳ организацийĕсем ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ, куллен кирлĕ таварсене çителĕклĕ кӳрсе тăмаççĕ.

Делегатсем партилле-организацилле тата идеологилле ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Парти вĕрентĕвĕн системинчи кружоксемпе политшкулсен занятийĕсем çителĕксĕр пулса иртеççĕ. Агитколлективсен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ агитколлективсене тивĕçлĕ пулăшу паман. Агитаторсен семинарĕсемпе канашлăвĕсене сайра хутра çеç иртгернĕ.

Конференцире КПСС райкомĕн, ревизи комиссийĕн çĕнĕ составне тата партин облаçри XXV-мĕш конференцине кайма делегатсем суйларĕç.

КПСС райкомĕн организацилле пленумĕнче райком секретарĕсем пулма П. Тимофеев, Н. Фомин, А. Селĕнин юлташсене суйларĕç.

И. МЕШКОВ.

ЕЛЧĔК

Районти парторганизацин конференцийĕнче отчетлă тапхăрти ĕçсем çинчен райком секретарĕ Алексеев юлташ доклад турĕ.

Докладчик районти парторганизацирĕ партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕçсем лайăхланнине палăртрĕ. Хуçалăх ĕçĕсем кăçал иртнĕ çулхинчен йĕркеллĕрех пулса пыраççĕ. Районти колхозсем çуракипе кĕраки ĕçĕсене вăхăтра иртгернĕ, государствăна тырă, çĕрулми тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плансене ăнăçлă тултарнă. Колхозсен хуçалăхĕ тĕреклленсе, вĕсен тупăшĕсем ӳссе пыраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал кашни гектартан 22—25-шер центнер тĕштырă пуçтарса кĕртнĕ, пĕр миллион тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Свердлов ячĕпе тăракан, Ленин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем те çитĕнӳсем тунă.

Конференци районти парторганизаци ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене те кăтартса пачĕ. Пуçламăш парторганизацисен паянхи ĕçĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ кăларса тăратнă задачăсене тивĕçтерейменççĕ. Парти райкомĕ пуçламăш парторганизацисене çителĕксĕр ертсе пырать.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци политикăлла-массăлла ĕçе япăхтарнă, коммунистсен политикăлла вĕренĕвне кирлĕ пек йĕркелемен. Кунта кăçалхи 10 уйăх хушшинче коммунистсен пухăвне ултă хут çеç иртгернĕ, усă пуху пĕрре те пулман. Пуçламăш парторганизаци начар ĕçленине пула колхозра хуçалăх ĕçĕсем те юлса пыраççĕ. Анчах та КПСС райкомĕ çак колхозри парторганизацие вăхăтра кирлĕ пек пулăшу паман. Кун пек тĕслĕхсем районта тата пур.

Район, пĕтĕмĕшпе илсен, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă. Анчах уйрăм колхозсем ĕне выльăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе чылай юлса пыраççĕ. Колхозсен фермисенче ĕнесен йышĕ 27 процент кăна шутланать. Ĕнесен тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ: кăçалхи 10 уйăх хушшинче вăтам шутпа сăвакан кашни ĕнерен 794-шар литр сĕт суса илнĕ. Выльăхсем валли сĕтеклĕ апат сахал хатĕрленĕ, силос хывмалли плана 76 процент кăна пурнăçланă.

Районти суту-илӳ организацийĕсем колхозсене строительство материалĕсем сутассине кирлĕ пек йĕркелемен. Çакă колхозсене ĕçре пысăк чăрмав кӳрет.

МТС кăçал тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултарнă, анчах та колхозсемпе тунă договорсене уйрăм ĕçсем енĕпе пурнăçламасть.

Тухса калакансем МТС руководителĕсене обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йывăр ĕçсене механизацилес тата выльăх апачĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн критиклерĕç.

МТС-ра механизаторсем çитмеççĕ. Çав вăхăтрах районти колхозсенче 45 тракторист, 4 комбайнер пур. Анчах вĕсене механизаторсен ретне илес тĕлĕшпе МТС дирекцийĕ нимех те туман-ха.

Федоровпа Тябуков делегатсем ялхуçалăх специалисчĕсен ответлăхне ӳстерме кирли çинчен тата колхозсене строительство материалĕсем сутассине хăвăртрах йĕркелени кирли çинчен каларĕç.

Делегатсем районти парторганизацире идеологилле ĕçе вăйлатма сĕнӳ пачĕç. Районти ертсе пыракан партипе совет работникĕсем колхоз ĕçченĕсене лекцисемпе докладсем сахал вуласа параççĕ. Çавăн пекех КПСС обкомĕн лекторĕсем те района сахал килеççĕ. Ĕççыннисене кино кăтартас ĕçе япăх организациленĕ.

Прение 24 делегат тухса каларĕ.

Парти райкомĕн организацилле пленумĕ райком секретарĕсем пулма Г. Алексеев, Н. Волков тата А. Ефимова юлташсене суйларĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

Редакцие килнĕ çыру

Шкапсем хăçан илсе килĕç-ши?

Чурачăк райпотребсоюз сурчĕ умĕнче шкул руководителĕсем, вулав çурчĕсемпе библиотекăсен заведующийĕсем ӳпкелешсе каласса тăнине час-часах курма пулать.

— Мĕнле-ха капла? — ӳпкелешеççĕ шкул директорĕсем,—темиçе хутчен ыйтнă пулин те, шкапсем кӳрсе килмерĕç.

— Ан та калăр çав, пирĕн ыйтусене райпотребсоюз руководителĕсем хăлхана та чикмеççĕ,—кăмăлсăррăн хушса хурать Шурка ялĕнчи библиотека заведующийĕ А. Белов юлташ.

Ку библиотека кăçал 1.500 тенкĕлĕх кĕнеке туяннă. Анчах вĕсем шкап çук пирки сапаланса выртаççĕ.

Районти шкулсенче, вулав çурчĕсенче, уйрăмах çĕнĕрен уçнă библиотекăсенче шкапсем çитмеççĕ. Райпотребсоюз председателĕнчен Лукин юлташран шкапсем кӳрсе килме темиçе хутчен те ыйтнă. Вăл кашни хутĕнчех:—«Тепĕр виç-тăват кунтан килсе пăхăр, шкапсем пулаççĕ»,—тесе ĕнентерет.

Вăл çавăн пек ĕнентерме пуçланăранпа вăхăт нумай иртсе кайрĕ, анчах шкапсем пурпĕрех çук. Райпотребсоюз кăçал пĕр шкап та илсе килмен. Лукин юлташăн кун пирки кăштах шухăшласа пăхас пулать.

Е. ИЛЬИН,
Улаксарти библиотека заведующийĕ.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„Колхозниксен вĕренĕвне тивĕçлипе организацилеме вăхăт“

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра ноябрĕн 11-мĕшĕнче пичетленнĕ «Колхозниксен вĕренĕвне тивĕçлипе организацилеме вăхăт» ятлă çырура Калинино районĕнчи колхозсенче агрозоотехника курсĕсен ĕçне начар организацилениие, КПСС райкомĕ, райсовет исполкомĕ, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ тата МТС колхозниксен вĕренĕвĕ çине тимсĕр пăхнине кăтартса панăччĕ.

Районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ çырури фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни, унта асăннă çитменлĕхсене пĕтересси çинчен ноябрĕн 12-мĕшĕнче районти ялхуçалăх специалисчĕсемпе пĕрле сӳтсе явни, специалистсене курссем çумне çирĕплетни, пур агрозоокурссенче те занятисене программа тăрăх иртгермелле тума мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Вăрнар районĕнчи Кайри Тукай ялĕнче библиотека çук тата клуб çуртне туса пĕтермен тесе пĕлтерекен çыру килнĕччĕ. Çырăва редакци Вăрнар район Совечĕн исполкомне тĕрĕслеме янăччĕ.

Вăрнар район Совечĕн исполкомĕ çырура кăтартнă фактсем тĕрĕс тесе пĕлтерчĕ. 1954 çулта клуб çуртне туса пĕтерме тата библиотека уçма йышăннă.

Кузбаса килĕр

Кемерово облаçĕнче çĕр кăмрăкĕ нумай. Вăл хулăм сийсемпе выртать. Кузбасри çĕр кăмрăкĕ тĕнчере чи лайххи: вăл питĕ лайăх çунать, унтан кокс, шĕвĕ топливо, химилле тĕрлĕ продуктсем тăваççĕ.

Кузбасс çĕр кăмрăкĕпе кăна мар пуян. Кемерово облаçĕн кăнтăр пайĕнче тимĕр тăпри тата ытти пурлăхсем нумай.

Кунти пуянлăхсем ĕлĕк ахалех выртнă. Совет влаçĕн çулĕсенче çав пуянлăхсемпе усă курма пултаракан вăй тупăнчĕ. Çак вăй—Коммунистсен партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ.

Пĕрремĕш пилĕкçуллăх вăхăтĕнчех пирĕн парти халăх хуçалăхне малалла аталантарма тата çĕршыв оборонине тĕреклетме çĕр кăмрăкĕ ытларах кăларма тата металл шăратса кăларассине ӳстерме кирлине палăртнă.

Пĕр Донбасс çак пысăк задачăна татса пама пултарайман. Вара Уралпа Кузбасра аслă стройка пуçланнă. Парти чĕннипе кунта çĕршер пин совет çыннисем пынă, вĕсем чугун çулсем, электростанцисем, шахтăсем тунă. Томь юханшывĕ хĕрринче, Кузнецк хулинчен инçех мар, тĕнчери чи пысăк металлурги комбиначĕн домнисем ӳсе-ӳсе ларнă. Шахтăсемпе заводсем тавра пурăнмалли çуртсем, шкулсем, ача сачĕсем тунă.

Юлашки 20 çул хушшинче Кемерово облаçĕ палламалла мар улшăнчĕ. Ĕлĕкрех халăх сахал пурăннă вырăнсенче шахтăсемпе заводсем тунă. Пушă вырăн пулнă çĕрте вăрçăченхи пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче Кемерово, Сталинск, Прокопьевск, Киселевск хулисем ӳсе-ӳсе ларчĕç.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче, партипе правительство тимлĕн тăрăшнипе, Кузбасс хăйĕн производство хăватне малалла ӳстерсе пычĕ, халĕ те пур çĕрте те строительство ĕçĕсем анлăн пулса пыраççĕ.

Шахтерсен, металлургсен, строительсен коллективĕсем çамрăк рабочисемпе тăтăшах хутшăнса пыраççĕ. Çав çамрăк рабочисене ĕç резервĕсен вĕренӳ заведенийĕсем хатĕрлеççĕ. Вĕсем партипе правительство шанăçне чыслăн тӳрре кăларчĕç.

Кемерово облаçĕнче ĕç резервĕсен шкулĕсемпе училищисем нумай. Вĕсенчен çамрăк рабочисем çулсеренех вуншар пин вĕренсе тухаççĕ.

Училищĕсемпе шкулсенче вĕренекенсем пĕтĕмпех государство шучĕпе пурăнаççĕ. Вĕсене пĕр тӳлевсĕрех урана тăхăнмалли япаласем, тумтир, апат-çимĕç, вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем, общежитисем параççĕ. Вĕренӳ ĕçне опытлă мастерсем ертсе пыраççĕ. Партипе правительство питĕ лайăх условисем туса панине кура, çамрăксем ĕç резервĕсен шкулĕсемпе училищисене вĕренме пысăк хастарлăхпа каяççĕ.

Кузбаса вĕренме Тутар, Чăваш АССР-ĕсенчи, Воронеж, Ульяновск, Курск облаçĕсенчи çамрăксем килеççĕ.

Эпĕ кунта Чăваш республикинчен килнĕ çамрăксем çинчен кĕскен каласа парасшăн.

1952 çулта Çĕрпӳ районĕнчен килнĕ çамрăксене Киселевск хулинчи 60-мĕш номерлĕ сăрт-ту промышленность шкулне вĕренме илнĕ. Петров, Гурьев, Филиппов, Николаев çамрăксем горняк профессине тăрăшса вĕренчĕç. Вĕсем «Тайбинская» шахтăра практикăра пулчĕç. Çак шахтăна Кузбасри ытти шахтăсене пекех, питĕ паха техника панă. Çамрăксем государство экзаменне ăнăçлă тытрĕç. Халĕ Николай Петров пултаруллă та ăста рабочи пулса тăчĕ. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле Прокопьевск хулинчи «Восточная» шахтăра ĕçлет. Çамрăк рабочи уйăхне пиншер тенкĕ ĕçлесе илекен пулчĕ ĕнтĕ. Канашпа Вăрмар районĕсенчен килнĕ çамрăксем те ăнăçлă вĕренсе тухрĕç, вĕсем халĕ ĕçре паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсенчен уйрăмах П. Тимофеевпа Ю. Иванов юлташсене палăртмалла.

Юлашки виçĕ çул хушшинче Чăваш АССР-ĕнчен килĕ виçĕ пин çамрăк Кемерово облаçĕнче сăрт-ту промышленность шкулĕсенче специальноçсем илнĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ бригадирсем, десятниксем, старши рабочисем пулса ĕçлеççĕ.

Эпĕ хам Кузбаса Сĕнтĕр районĕнчи Янăм ялĕнчен килтĕм. Халĕ Прокопьевск хулинчи сăрт-ту промышленноçĕн 11-мĕш номерлĕ шкул директорĕн заместителĕ пулса ĕçлетĕп. Прокопьевск хули — промышленноçлă хула. Ун тавра шахтăсем питĕ нумай. Хулара ача сачĕсем, культура çурчĕсем, клубсем тата ытти культура учрежденийĕсем пур.

Пирĕн шкул Ясная Поляна ятлă поселокра вырнаçнă. Шкул патĕнче Сталин ячĕпе тăракан шахтăн культура çурчĕ, культурăпа кану паркĕ пур.

Шкул икĕ хутлă çуртра вырнаçнă. Шкулти вĕренмелли классем питĕ лайăх, унтах хĕрлĕ кĕтес, физкультура залĕ, библиотека пур. Кашни пӳлĕмре 4—5 çын пурăнать.

Шкулта литература, техника, художествăлла пултарулăх кружокĕсем пур. Художествăлла пултарулăх кружокĕсенчен пĕрне чăвашсенчен йĕркеленĕ. Канмалли кунсенче лекцисем, кино, походсем пулаççĕ.

Вĕренекенсем валли питĕ лайăх условисем туса панă. Вĕсене кунне виçĕ хут тутлă та тутă апат çитереççĕ. Çамрăксем пушă вăхăта культурăллă иртгереççĕ.

Вĕреннĕ хушăра ултă уйăх сисĕнмесĕрех иртсе каять. Çамрăк рабочисем, хăйсемшĕн партипе правительство тимлĕ тăрăшнипе хавхаланса, ĕçре паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Акă, шкултан вĕренсе тухнă Ефремовпа Чайка рабочисем уйăхне иккĕшер-виçшер пин тенкĕ укçа ĕçлесе илеççĕ. Пурăнасса вĕсем çутă та лайăх пӳлĕмсенче пурăнаççĕ.

Хальхи вăхăтра ФЗО шкулĕсене тата сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренме илеççĕ. Вĕренме 16—17 çулхи, тăвата çултан кая мар вĕреннĕ çамрăксене илеççĕ. Вĕсене забойщик, крепильщик, проходчик, каменщик, платник ĕçĕсене тата ытти специальноçсене вĕрентмелле пулать.

Хаклă земляксем, Кузбаса вĕренме килĕр!

П. РОМАНОВ,
шкул директорĕн заместителĕ, Совет Союзĕн Геройĕ.

Фермăсенчи ĕçсене механизацилеççĕ

ПЕПРЕÇ. «Путиловка» колхозра фермăри ĕçсене механизацилесех пыраççĕ. Шыв парса тăмалли башня лартса, витесене шыв пăрăх тăрăх илсе пымалла тунă. Выльăх апачĕсене пĕçерме кормозапарник лартнă, выльăх кăшманне, çĕрулмине вĕтетмелли машинăсем лартнă.

Киров ячĕпе тăракан колхозра та фермăри ĕçсене механизацилеме тытăннă.

И. ТИХОНОВ

Пропаганда ĕçĕн идейăлла шайне ӳстерессишĕн

КПСС XIX-мĕш съезчĕ парти организацийĕсене идеологилле ĕçе хакламаннине пĕтерме, ăна партипе государствăн мĕнпур сыпăкĕсенче вăйлатма хушса хăварчĕ. Съезд решенийĕсене пурнăçласа, республикăри хула комитечĕсемпе райкомсем тата пуçламăш парторганизацисем КПСС членĕсемпе кандидачĕсене марксизм-ленинизма вĕрентес тĕлĕшпе активлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Парти организацийĕсем нумайăшĕ идеологилле ĕçе ертсе пырассине лайăхлатрĕç.

Анчах парти пропаганди коммунизм строительствин кучуххехи тапхăрĕнче кадрсене, КПСС членĕсемпе кандидачĕсене идеологи енĕпе воспитани парас тĕлĕшпе тăракан задачăсен çӳлĕшĕнче тăмасть-ха. Пропаганда ĕçĕнче çаплах теорие догма вырăнне хурса вĕрентессине, начетничествăна тата цитатăсем кăна илсе кăтартнипе вĕрентессине пĕтермен-ха. Теорилле ыйтусене час-часах историлле конкретлă лару-тăруран уйрăм илсе вĕрентеççĕ. Промышленноçа, ялхуçалăхне малалла аталантарас, колхозсен обществăлла хуçалăхне ӳстерес, вĕсене организацилле хуçалăх енĕпе тĕреклетес тĕлĕшпе парти организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсене пропагандистсем çителĕксĕр сутатаççĕ.

Халăх массисен, партипе уйрăм çынсен историри ролĕ çинчен марксизм-ленинизм вĕрентнине пăсса сутатнисем те пулнă. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» кăларнă май 1938 çулхи ноябрь уйăхĕнче Центральнăй Комитет йышăннă постановленире парти историне уйрăм çынсемпе вĕсен биографийĕсем тăрăх мар, марксизм-ленинизмăн тĕп идейисене, историри фактсене сутатса панă тăрăх вĕрентмелле, тесе кăтартса панине манса кайнă. Парти пропагандисчĕ час-часах уйрăм çынсен пĕлтерĕшне мала хурса сутатнипе чăрăнса тăнă, парти съезчĕсен, конференцийĕсен, Центральнăй Комитетăн пленумĕсем йышăннă решенисене вĕрентме кирли çине тимсĕррĕн пăхнă.

Пропаганда ĕçĕнче социализмăн экономикăлла законĕсен характерне пăсса вĕрентнисем пулнă. Çакă вăл общество аталанăвĕн объективлă закономерноçне сирсе ярасси патне илсе пынă. Çав вăхăтрах партин ертсе пыракан пĕлтерĕшĕ çинчен, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешӳре ССР Союзĕнчи ĕççыннисен аллинче тĕп хĕçпăшал пулса тăракан социализмла государство çинчен, пирĕн государство вăйĕсен çăлкуçĕсем çинчен, ССР Союзĕн хуçалăхпа оборона хăватне малалла вăйлатса пыма кирли çинчен тăракан ыйтăва çителĕксĕр сутатнă.

Ленинла-сталинла наци политики çинчен ăнлантарса парас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пулнă. Ленинла-сталинла наци политикине тытса пынипе политика, культура, экономика енĕпе тунă çитĕнӳсене кирлĕ пек сутатса паман. Ĕççыннисене совет патриотизмĕ тата пролетарилле интернационализм майлă воспитани парас ĕç çине çителĕксĕр пăхнă. Нумай нацилле Совет государствине ыванма пĕлмесĕр тĕреклетес тата халăхсем хушшинчи тăванла туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене тĕплĕн сутатса паман.

Марксизм-ленинизмăн уйрăм положенийĕсене пăсса сутатнине хирĕç, буржуалла идеологие тата буржуалла-национализма хирĕç татăклăн кĕрешмелле, парти кадрĕсемпе парти членĕсен, мĕнпур ĕççыннисен революцилле сыхăлăхне вăйлатмалла. Парти пропаганди коммунистсене тата мĕнпур ĕççыннисене коммунизм ĕçĕ çĕнтересси шанса тăма вĕрентмелле. Коммунистсен партийĕпе социализмла Тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратма, халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме тата пролетарилле интернационализма аталантарма воспитани памалла. Советлă социализмла строй малта тăнине, Совет государствине пур майсемпе те тĕреклетсе пыма кирлине конкретлă тĕслĕхсем тăрăх вĕрентмелле.

Парти организацийĕсем умĕнче пропаганда тĕлĕшпе тăракан задача вăл парти вĕренĕвĕн пахалăхне лайăхлатасси пулать.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн материалĕсем çинчен, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем çинчен тата партипе правительство юлашки вăхăтра йышăннă ытти постановленийĕсем çинчен каласа панă чухне пропагандистсен çапла тума тăрăшмалла: çак историлле задачăсене ăнăçлăн татса парас ĕçре вĕренекенсем хăйсен коллективĕсемпе хăйсем умĕнче тăракан задачăсене лайăх ăнланма пултарччăр. Çак решенисем вĕсем промышленноçпа ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан вăраха ямасăр тумалли ĕçсене татса пама, совет халăхĕн пурнăçне малалла лайăхлатма пулăшаççĕ. Кружок руководителĕсен, лекторсен, консультантсен хисеплĕ ĕçĕ вăл вĕренекенсене парти политикине пурнăçа кĕртессишĕн активлă кĕрешме мобилизацилесси пулать.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче парти организацийĕсем чылайăшĕ кадрсене вĕрентес ĕç çине кирлĕ пек пăхман. Чылай районсенче ку ĕçе çителĕксĕр организациленĕ. Çавна пула парти, совет тата хуçалăх работникĕсен пĕр пайĕ марксизм-ленинизм теорине тăтăш вĕренсе пыман, халăх хуçалăхĕн экономикине начар пĕлнĕ. Парти съезчĕсен, конференцийĕсен тата Центральнăй Комитетăн пленумĕсен решенийĕсене, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене тарăннăн вĕренес вырăнне уйрăм брошюрăсем вуласа тухнипе кăна чăрăнса тăнă, кирлĕ пĕлӳсем илеймен.

Кăçал кадрсене политикăлла пĕлӳ парас ĕçе ертсе пырассине татăклăн лайăхлатмалла, иртнĕ çулсенче ку ĕçре пулнă йăнăшсене пĕтермелле.

Парти вĕренĕвĕнче иртнĕ çулсенче пулнă пысăк çитменлĕх вăл нумай организацисенче вĕренĕве ирĕклĕ принцип тăрăх хутшăнтарассине пăсни пулнă. Коммунистсем кружоксенче тата семинарсенче, каçхи партшкулсемпе университетсенче вĕренесси ирĕклĕ ĕç пулмалла. Политикăна сахал вĕреннĕ коммунистсене политшкулсенче вĕрентмелле.

Пропаганда ĕçĕн пахалăхĕпе организациллĕхне лайăхлатас тесен парти организацийĕсен мĕн тумалла-ха?

Лекцилле пропагандăна анлăн сармалла. Хула комитечĕсемпе райкомсем çумĕнче КПСС историйĕпе теорийĕ, промышленноçпа ялхуçалăх экономики, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем тăтăшах иртгерме лекторисем уçмалла. Парти органĕсен лекцисен пахалăхне лайăхлатасси çине тимлĕн пăхмалла. Лекцисен содержанийĕ партин шалти тата тулашри политики умĕнче тăракан задачăсене пăхăнса тăмалла.

Хула комитечĕсемпе райкомсем çумĕнче, ирĕклĕх принципĕ тăрăх, КПСС историне, диалектикăлла тата историлле материализма, политэкономие, промышленность предприятийĕсемпе ялхуçалăх экономикине вĕренме партипе совет активĕ валли семинарсем организацилемелле.

Кружоксенче, семинарсенче, каçхи университетсенче, партшкулсенче парти историне, марксизм-ленинизмăн классикĕсен произведенийĕсене вĕреннĕ чухне парти съезчĕсемпе конференцийĕсен, Центральнăй Комитетăн пленумĕсен решенийĕсене вĕренес ĕçе организацилемелле.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнчен пуçласа каçхи партшкулсемпе университетсенче виçĕ çул вĕрентмелле тунă. Çакă вăл коммунистсене тĕплĕ пĕлӳ илме, вĕренӳ планĕнче пăхса хунă документсемпе литературăна вĕренес ĕçе васкамасăр туса пыма май парать.

Политшкулсемпе кружоксене ертсе пыма марксизм-ленинизм енĕпе тарăн пĕлӳ илнĕ парти членĕсене хутшăнтармалла. Çакăнпа пĕрлех пропагандистсене пур енчен те пулăшса пыни кирлĕ. Пропагандистсен семинарĕсене ертсе пыма квалификациллĕ руководительсем уйăрмалла. Пропагандистсем валли час-часах докладсемпе лекцисене партипе совет работникĕсен, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенче ĕçлекен специалистсен тумалла.

Пропаганда ĕçĕн идейăлла-теорилле шайне ӳстерес тесен, парти вĕренĕвне парти органĕсем енчен куллен ертсе пыни кирлĕ. Çавăнпа та парти комитечĕсен ларăвĕсемпе пленумĕсенче, парти активĕн пухăвĕсенче, пуçламăш парторганизацисенче КПСС членĕсемпе кандидачĕсен политикăлла вĕренĕвĕ çинчен тăракан ыйтăва тăтăшах сӳтсе явни кирлĕ.

Парти организацийĕсен политшкулсемпе кружоксем тата семинарсем вĕренӳ кунĕсене сиктермесĕр ĕçлесе тăмалла тăвассишĕн, вĕсенче вĕренме кăмăл тунă коммунистсем пурте занятисене йĕркеллĕ çӳремелле тата вĕренӳ программине пурнăçламалла тума тăрăшмалла. Марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсем валли икĕ уйăхра пĕр хутран кая мар калаçусем е семинар занятийĕсем иртгермелле.

Çапла майпа кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пропаганда ĕçĕн пахалăхĕпе организациллĕхне пур енчен те лайăхлатмалла.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ иртнĕ çулхинчен лайăхрах пуçланчĕ. Анчах малтанхи занятисем нумай райкомсемпе хула комитечĕсем иртнĕ вĕренӳ çулĕнчи çитменлĕхсенчен кирлĕ пек выводсем туманнине кăтартрĕç. Шăмăршă, Муркаш, Вăрнар, Шупашкар, Вăрмар райкомĕсем политшкулсемпе кружоксене вĕренме илессине ячĕшĕн кăна тунă, политикăлла вĕренĕвĕн формине—ирĕклĕн суйласа илмелли принципа пăснă. Политшкулсемпе кружоксенче вĕренме час-часах аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă е аслă шкулсенче заочнăй йĕркепе вĕренекенсене тата ватăлнă, чирлĕ коммунистсене илнĕ. Çав вăхăтрах партире тăман актива, колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене вĕренĕве çителĕксĕр хутшăнтарнă. Хула комитечĕсемпе райкомсем пуçламăш шкулсенчен вĕренсе тухман коммунистсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ парассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ.

Çĕмĕрлепе Куславкка районĕсенче кружоксен, политшкулсен тата семинарсен малтанхи занятийĕсенче вĕренекенсем сахал пулнă. Чылай кружоксенче занятисем пулман. Çĕмĕрле хулинче кăна 15 политшкулта тата кружокра занятисем пулман.

Нумай райкомсемпе хула комитечĕсем пропагандистсен кадрĕсене вĕрентме кирлине хакламаççĕ. Семинарсен руководителĕсем кружоксемпе политшкулсенчи занятисенче пулмаççĕ. Пропагандистсен семинарĕсенче теорилле лекцисем кăна иртгереççĕ. Пропаганда ĕçĕнчи паха опытпа паллаштарас ĕçе организацилемеççĕ.

Нумай пропагандистсем Коммунистсен партийĕ совет обществин ертсе тата çул кăтартса пыракан вăйĕ пулнине çителĕксĕр кăтартса параççĕ. Партипе правительство халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине татăклăн ӳстерес тата ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе туса иртгерекен ĕçсем çинчен çиелтен кăна ăнлантарса параççĕ.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренме килĕшнĕ коммунистсен вĕренĕвне уйрăм райкомсемпе хула комитечĕсем начар ертсе пыраççĕ. Тĕслĕхрен, КПСС Вăрмар райкомĕн бюровĕ коммунистсемпе ертсе пыракан кадрсен марксистла-ленинла вĕренĕвне лайăхлатма кирлĕ пек тăрăшмасть, парти вĕренĕвне çителĕксĕр ертсе пырать. Нумай пропагандистсем марксистла-ленинла пропагандăна парти шалти тата тулашри политика енĕпе тытса пыракан практикăлла задачăсемпе çыхăнтармаççĕ. Çакăнпа райком килĕшет. Районти коммунистсемпе кадрсем харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçе начар организациленĕ. Райкомăн штатра тăман лекторсен ушкăнĕ октябрь уйăхĕнче нимĕн те туман. Райком пропагандистсен йышне лайăхлатма тăрăшмасть, вĕсен теорилле тата методикăлла пĕлĕвне çителĕклĕ ӳстерсе пымасть.

Чылай КПСС райкомĕсем çумĕнчи штатра тăман лекторсен ушкăнĕсем парти вĕренĕвне хутшăннă коммунистсемпе кадрсем валли лекцисем вулас ĕçе тивĕçлипе сарса яман. Лекторсен пĕр пайĕ ку тарана çитсе те лекцисене хатĕрлеме тытăнман.

Хула комитечĕсемпе райкомсен кăçалхи вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче палăрнă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Н. СЕМЕНОВ.

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ МИР СОВЕЧӖН СЕССИЙӖ

Жолио-Кюри 1953 çулхи ноябрӗн 23-мӗшӗнче Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессине уçнӑ чухне каланӑ сӑмах

Çак сессие уçса, эпӗ пире пӗрлештерсе тӑракан çыхӑнусен пӗлтерӗшне лайӑх ӑнланатӑп. Çав çыхӑнусем пурин те пӗрлӗхлӗ пулса миршӗн тӑрас шухӑш-кӑмӑла пулнӑ май çуралнӑ тата кӗрешӳре, час-часах хаяр, анчах яланах хумхантаракан кӗрешӳре тӗрекленсе пыраççӗ. Халӑхсен чи ырӑ кӑмӑллӑ шухӑш-ӗмӗчӗсем умӗнче хамӑр ответлӑ пулса тӑнине лайӑх туйса, эпир хамӑр умна çакӑн пек тӗллев лартнӑ: мир тӑвассишӗн пыракан пӗтӗм тӗнчери кӗрешӗве тӗрӗслӗхлӗ те усӑллӑ ӗçсем пулӑшнипе малалла аталантарса пымалла. Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн трибуни çинче тата вӑл пуçарнӑ тӑрӑх пухнӑ мӗнпур аслӑ конгрессен трибуни çинче пӗтӗм тӗнчери тӗрлӗ социальнӑй сийсем хӑйсем чун-чӗререн миршӗн хытӑ тӑнине уççӑн палӑртнӑ.

Тӗнчери лару-тӑрӑва мир ӗçӗ майлӑ туса улӑштарас тесен, мӗнпур халӑхсен пӗтӗмӗшле ответ тытмалла; хӑшпӗр халӑхсем, унсӑр пуçне, уйрӑм ответ тытаççӗ. Стокгольмри Воззвани çине, пилӗк аслӑ держава хушшинче калаçусем ирттерме чӗнсе калани çине ответлесе, хӗçпӑшалсӑрланасси çинчен эпир тӑратнӑ резолюцисем çине ответлесе анлӑн сарӑлнӑ пирӗн кампанисем тата пирӗн хальхи кампани,—тӗнчери ыйтусене мирлӗ майпа татса парасси çинчен Будапештра йышӑннӑ Воззвани хыççӑн сарӑлнӑ кампани—çаксем пурте асӑннӑ тӗллевпе туса пыракан ӗçсем.

Юлашки уйӑхсенчи событисем хыççӑн тӗнчери лару-тӑру çакна уççӑн кӑтартса парать: çак пӗтӗмӗшле ответлӑхсӑр пуçне, хӑшпӗр çӗршывсем, апла пулсан вӗсен наци юхӑмӗсем те, уйрӑм ответ тытаççӗ. Çав ответлӑх питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Çак ответлӑх ним тӑхтаса тӑмасӑр ӗçсем туса ирттерме хушать, вӑл ӗçсен ӑнӑçлӑхӗ мире сыхласа хӑварас тата тӗреклетес ӗçре татӑклӑ вӑй пулса тӑма пултарать. Германипе кӳршӗллӗ çӗршывсем Европӑри оборона пӗрлешӗвне хирӗç е милитаризмла Германие ытти урӑхла майсемпе тепӗр хут хӗçпӑшаллантарнине хирӗç тӑни, Азири çӗршывсем тата Корея ыйтӑвне татса парассипе тата Вьетнамри вӑрçа чарса лартассипе интересленекен çӗршывсем кӗрешни,—çаксем пурте миршӗн пыракан кӗрешӳре уйрӑм çӗршывсен ответлӑхне чи малти вырӑна хуракан ӗçсен шутне кӗреççӗ.

Вӑй политики майлӑ тӑракансем общественноçа тӗрлӗ майсемпе улталама тӑрӑшнине кӑтартса парса, Жолио-Кюри çакна паллӑ тунӑ: тӗрӗс те ӑнланмалла тӗслӗхсемпе ӑнлантарса парасси миршӗн тӑракансен задачи пулса тӑрать, тенӗ. Çав тӗслӗхсем фактсене тивӗçлипе вӗренни çинче никӗсленсе тӑмалла.

Пире хирӗç тӑракан енӗ вӑйлӑ, тенӗ вӑл, унӑн сивӗ вӑрçӑн лайӑхлатнӑ хӗçпӑшалӗ пур, сӑмахран, психологилле вӑрçӑ ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ӗçлекен управлени çав хӗçпӑшалпа ӗçе лайӑх пӗлсе усӑ курать. Пирӗн яланах суяна хирӗç тата чее мелсене хирӗç кӗрешме тивет. Нумаях пулмасть пулса иртнӗ ӗçсем çав чее мелсем тӗрлӗрен пулнине лайӑх кӑтартса параççӗ. Вӗсен тӗллевӗ килӗшӳсем тума чӑрмантарасси пулнӑ. Ку ӗçсем çакна ӑнланса илме май параççӗ: калаçусем ирттересси çинчен панӑ хӑшпӗр сӗнӳсене пуриншӗн те юрӑхлӑ решенисем йышӑнма килӗшӳ тӑвас тӗллевсем майлӑ мар—халӑхсем чун-чӗререн пурнӑçа кӗртме тӑрӑшакан тӗллевсем майлӑ мар, пачах урӑхла çырса хатӗрлеме пултараççӗ. Калаçусем пынӑ вӑхӑтра тунӑ пӗртен-пӗр çӗнтерӳ вӑл—мир. Çакӑн пек çӗнтерӳ пирӗншӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Калаçусем вӗсем тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатмалли, ун хыççӑн йывӑр лару-тӑрӑва пӗтермелли меслет пулнине, хӗçпӑшаллӑ хирӗçӳсене пӗтермелли, тӗнчери ыйтусене татса памалли, хӗçпӑшалсӑрланас ӗçе пурнӑçа кӗртмелли меслет пулса тӑнине халӑхсем кураççӗ.

Теприсем хӑйсене калаçусем ирттерессишӗн тӑнӑ пек туса кӑтартма тӑрӑшаççӗ. Анчах вӗсем калаçусем ирттерме тӗрлӗ условисем кӑларса тӑратаççӗ. Çав условисем калаçусене пӗтерсе лартасси патне илсе çитерӗç, çав условисем вӗсене тата ытларах вӑйланма май паракан условисем пулса тӑраççӗ.

Европа варринче, тенӗ малалла Жолио-Кюри, каллех хӑрушлӑх тухса тӑчӗ. Çав хӑрушлӑх Германи кӳршисемшӗн питех те паллӑ. Вӑл—Германи милитаризмӗн хӑрушлӑхӗ.

Нимӗç милитарисчӗсене хутшӑнтаракан пӗрлешӗве оборона тӗллевӗпе тӑваççӗ тесе ӗнентерме çӗнӗрен те çӗнӗрен калакан сӑмахсене çак фактсем сирсе яраççӗ: Бонн Германийӗн хальхи хуçисем—вӗсене Америка правительстви пулӑшса тата хавхалантарса тӑрать, — территорисем пирки хӑйсен требованийӗсене туса хатӗрленӗ ӗнтӗ. Бонн парламенчӗ 1952 çулхи декабрӗн 6-мӗшӗнче резолюци йышӑннӑ. «Правительствӑна Европа çарне тӑвасси çинчен тунӑ договора хутшӑннӑ çӗршывсене çакӑн çинчен пӗлтерме хушас: Германин хальхи чиккисем, Хӗвелтухӑçӗнче те, Хӗвеланӑçӗнче те федеральнӑй республикӑшӑн нимӗн чухлӗ те юрӑхлӑ мар»,—тенӗ вӑл резолюцире. Германире суйлавсем пулнӑ хыççӑн тепӗр кунне Аденауэр канцлер çапла пӗлтернӗ: «Европӑна туса хурӗç. Ӑна тунӑ хыççӑн эпир хамӑрӑн çамрӑксене мӗн кирлине—вӗсен экспансийӗ валли те анлӑрах территори туса парӑпӑр».

Милитаризмла Германие тепӗр хут хӗçпӑшаллантарни Америкӑн ют çӗршывсене хапсӑнакан стратеги политикипе килӗшсе тӑни питех те паллӑ. Реванш шухӑшкӑмӑлӗпе пурӑнакан, тепӗр хут хӗçпӑшалланнӑ Германи питӗ чаплӑ стратегилле база пулса тӑрать, тесе шутлаççӗ. Хӗвеланӑçри çӗршывсенчи — Германи кӳршисенчи—граждансемшӗн ытларах та ытларах çакӑ паллӑ пулса тӑрать: çак плансене пурнӑçа кӗртес пулсан, вӗсен хӑрушсӑрлӑхӗ хӑрушлӑх умне тухса тӑрӗ, мӗншӗн тесен Германи, ӗлӗк тунӑ пекех, çак çӗршывсем çине тапӑнма шухӑш тытма пултарать. Çак агрессиллӗ политикӑна оборона ячӗпе витӗнсе кӑларса тӑратаççӗ, тӗрӗссипе илсен, вӑл политика пӗтӗм тӗнчери хӑрушсӑрлӑхшӑн пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑрать. Агрессиллӗ политика Англипе Совет Союзӗ тата Франципе Совет Союзӗ хушшинчи договорсене нимӗн вырӑнне те хурасшӑн мар. Вӑл Потсдамра тунӑ килӗшӳсене йышӑнмасть. Çак килӗшӳвӗн тӗп принципӗсем тӑвата аслӑ держава хушшинче демократиллӗ тата мире юратакан пӗрлӗхлӗ Германи тӑвасси çинчен договор тума май панӑ пулӗччӗç. Милитаризмла Германие тепӗр хут хӗçпӑшаллантарас хӑрушлӑха сирсе ярассишӗн мӗнпур халӑхсем ответлӑ пулса тӑраççӗ. Анчах Германипе кӳршӗллӗ çӗршывсен ответлӑхӗ уйрӑммӑнах пысӑк.

Общественноçа улталама çакнашкал намӑссӑр меслетсемпе, паллах, халиччен нихçан та усӑ курман. Çапла, тӑвата держава конференцине пухасси çинчен Совет Союзӗ панӑ сӗнӳ пирки асӑнса, Францин ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ, 1953 çулхи октябрӗн 29-мӗшӗнче республика советне çапла пӗлтернӗ: «Эпир Совет Союзӗ хӑй мӗнле ыйтусем хускатас тет, çавӑн пек ыйтусем, сӑмахран, хӑрушсӑрлӑх ыйтӑвне хускатма пултаракан конференцишӗн тӑратпӑр. Совет Союзӗ хӑйӗн хӑрушсӑрлӑхӗ çинчен калаçӗ, эпир хамӑрӑн хӑрушсӑрлӑх çинчен калаçӑпӑр». Кун пек каланине эпир ырламасӑр тӑма пултараймӑттӑмӑр, анчах çак сӑмахсем умӗнче тӑракан предложенире министр кун пек конференци тума пултаракан мӗнпур шанӑçсене малтанах пӗтерсе хурать. Министр татӑклӑн çапла пӗлтернӗ: «Европӑри оборона пӗрлешӗвӗ тата тӑвата державӑн конференцийӗ пӗр-пӗринпе çыхӑнса тӑракан икӗ пай». «Кашниех мӗнле ыйту хускатас тет, çав ыйтӑва хускатма пултаракан» конференцие тата хӗçпӑшаллӑ вӑйсем тума палӑртакан договора мӗнле-ха пӗр-пӗринпе çыхӑнса тӑраççӗ тесе калама май пултӑр? Çав хӗçпӑшаллӑ вӑйсем агрессиллӗ тӗллев тытаççӗ, мӗншӗн тесен вӗсене малтанах территори тӗлӗшӗнчи требованисемпе çыхӑнтарнӑ, ку требованисене вӑрçӑсӑр пурнӑçлама май çуккине пӗтӗм тӗнче пӗлет. Асӑннӑ договор Германи пӗрлӗхне тума чарать.

Наци Мир Совечӗн ларӑвӗнче хамӑр çӗршывӑн çыннисене чӗнсе калаçа, сирӗн шухӑш-кӑмӑла палӑртассине шанса тӑрса, эпӗ Мир Совечӗн председателӗ пулнӑ май çапла каланӑччӗ: «Хальхи вӑхӑтра Франци халӑхӗ лару-тӑрӑва мир майлӑ çавӑрма пултарать. Çакна мӗнпур çӗршывсенче, пӗтӗм тӗнчере ӑнланаççӗ. Эсир туса пыракан кампани мӗнле пынине интересленсе, ӗненсе тата шанса сӑнаса тӑрӗç. Эпир пӗччен мар. Мӗнпур çӗршывсенчи халӑхсем Франци халӑхӗнчен вӑл пысӑк ӗç тӑвасса кӗтеççӗ, ӑна шанса пурӑнаççӗ».

Эпӗ Франци мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине паллӑ тунине çапла ӑнлантарса пама пулать: юлашки çулсем хушшинчи ӗçсене тата халӗ вӑйра тӑракан договорсене пула, Францин татӑклӑ пырса çапма, вӑрçӑ патне пырассине чарса лартма май пур. Анчах çак ӗçре Германипе кӳршӗллӗ мӗнпур çӗршывсем те пысӑк ответ тытаççӗ, эпир вӗсен ӗçӗсене те çавӑн пекех тимлӗн сӑнатпӑр, çавӑн пекех шанса тӑрса вӗсене вӑйлӑн пулӑшатпӑр.

Жолио-Кюри малалла çапла каланӑ:

Пӗтӗм тӗнчери халӑхсем Азире пулса иртекен ӗçсене, уйрӑммӑнах Корейӑпа çыхӑнса тӑракан ӗçсене питӗ тимлӗ сӑнаса пыраççӗ. Çак ӗçсене вӑрçӑ пуçланнӑ вӑхӑтранпа пӑхса тухни çакна кӑтартса парать: Корея халӑхӗн шалти ӗçӗсене хутшӑннӑ çӗршывсем хӑйсене хӗçпӑшал пулӑшнипе çӗнтерӳ тумалӑх вӑйлӑ тесе шутланӑ. Чи малтан пуçласах вӗсем вӑрçӑ ӗçӗсене чарса лартассине хирӗç тӑнӑ, пулса тӑнӑ лару-тӑру çинчен Корейӑри вӑрçа хутшӑннӑ икӗ енӗн представителӗсем умӗнче Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗнче пӑхса тухассипе килӗшмен. Вӑрçӑ ӗçӗсене чарса лартма, калаçусем ирттерес шухӑша çӗнтерме май парса, мир вӑйӗсем пысӑк çӗнтерӳ турӗç.

Американецсемпе китаецсем тата кореецсем хушшинче калаçусем пулма пултарни курӑнчӗ. Калаçусем ирттерни перемири çинчен килӗшӳ тума май пачӗ. Çак факт питех те пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Вӑл тӗнчери çыхӑнусенчи йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатма нумай пулӑшнӑ. Анчах ытти фактсем, сӑмахран, Ли Сын Ман перемири çинчен калаçусем пынӑ вӑхӑтра хӑйне мӗнле тытни, Ли Сын Манпа Пӗрлешӳллӗ Штатсем хушшинче, çавӑн пекех Америка ертсе пынипе Корейӑри вӑрçа хутшӑннӑ 16 держава хушшинче тунӑ килӗшӳ çине алӑ пусни малашне йывӑрлӑхсем пуласине пӗлтернӗ.

Тӗнчери йывӑр лару-тӑру çӑмӑлланассинчен хӑракан вӑйсем, политикӑлла конференцие пухма чӑрмантарас тесе, халӗ тем тӗрлӗ майсемпе те усӑ кураççӗ. Малтанхи калаçусенче вӗçӗмсӗр йывӑрлӑхсем тухса тӑраççӗ.

Корейӑпа Китай делегачӗсем халӗ çеç çӗнӗ план сӗннӗ. Вӑл план калаçусене вӑй позицийӗ енчен туса пыма пултарассине пӗтерме тӑрӑшать. Çак тӗлӗшпе политикӑлла конференцие СССР, Инди, Пакистан, Индонези, Бирма пек нейтральнӑй çӗршывсене хутшӑнтарма палӑртнӑ.

Çак план калаçусем ирттерес тӗлӗшпе халӑхсен шухӑш-кӑмӑлӗпе килӗшсе тӑрать, çавӑнпа ӑна конференцие хутшӑнакан мӗнпур çӗршывсен йышӑнмалла. Çак плана путарса лартма хӑтланаççӗ. Даллес çапла хӑратать: палӑртнӑ кун тӗлне кореецсемпе китаецсем Политикӑлла конференци çинчен ООН-ӑн ытларахӑшӗ панӑ хальхи вӑхӑтри пек сӗнӗве йышӑнмасан, перемири пирки тунӑ килӗшӗвӗн тыткӑнри çар çыннисем çинчен калакан пайне пӑхӑнма пӑрахатӑп, тет. Ку çапла мар-и вара?

...Пӗтӗм этемлӗхшӗн питех те кирлӗ тепӗр ыйту пур. Сӑмах халӑха йышлӑн вӗлермелли хӗçпӑшалпа усӑ курма чарасси тата хӗçпӑшалсӑрланасси çинчен пырать. Иккӗмӗш тӗнче вӑрçи пӗтнӗ хыççӑн çакӑн пек тавлашусем кӑларакан, нумай калаçтаракан ыйтусем сахал пулнӑ-ха.

Мир Совечӗ çак ыйту çине кашниччех тимлӗ пӑхнӑ. Стокгольмри Воззвание пӗтӗм тӗнчери общественность хӗрӳллӗн ырланине эпир пӗлетпӗр. Халӑха йышлӑн вӗлермелли хӗçпӑшалпа усӑ курма чарассишӗн пыракан шухӑш-кӑмӑл халӗ те малтанхи пекех вӑйлӑн палӑрать.

Çак ыйтӑва татса парас ӗçре хӑшпӗр çитӗнӳсем тунӑ пулин те, çакна йышӑнмалла: халӗ тӗрлӗрен, пӗр-пӗрне хирӗçлекен шухӑш-кӑмӑлсем пур, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн хӗçпӑшалсӑрланас тӗлӗшпе ӗçлекен комиссийӗ халиччен мӗнле те пулин тивӗçлӗ ӗç туман-ха. Атомлӑ хӗçпӑшалпа усӑ курма чарасси çинчен килӗшӳ тума чарас тесе, халӗ те малтанхи сӑлтавсене кӑларса тӑратаççӗ. Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗнче юлашки вӑхӑтра кӑларса тӑратнӑ мӗнпур сӗнӳсенче, Францин министрӗ пулнӑ Жюль Мокӑн сӗнӗвӗсенче каллех Барух планӗнчи пек хирӗçӳсем палӑраççӗ. Барух планӗ тӑрӑх, атомлӑ хӗçпӑшалпа усӑ курма чаричен, мӗнпур хӗçпӑшаллӑ вӑйсемпе мӗнпур атомлӑ предприятисем çинчен сведенисем пухмалла.

Халӑхсен мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ирттернӗ конгресӗ хыççӑн эпӗ Пӗрлешӳллӗ Штатсем Барух планне хӳтӗлесе мӗншӗн çав териех турткаласа тӑнин сӑлтавӗсене уçса палӑртма хӑтлантӑм. Барух планӗ пӗтӗм тӗнчери орган тума палӑртать. Çав орган уран тӗл пулакан вырӑнсемпе атомлӑ установкӑсен хуçи пулса тӑмалла.

Хӑйсемшӗн усӑллӑ ытларахӑшӗ сыхланса юласшӑн шанса тӑрса, ку план майлӑ тӑракансем çав органӑн решенийӗсене ытларахӑш сасӑпа йышӑнмалла тӑвассишӗн çине тӑраççӗ. Ку вӑл Барух планӗшӗн тӑракансем пӗтӗм тӗнчери çӗршывсенче атомлӑ энергипе çыхӑннӑ мӗнпур ыйтусем тӑрӑх промышленноçпа экономика енӗпе хӑйсем кӑна хуçа пулса тӑрассине пӗлтернӗ пулӗччӗ. Анчах çакӑн пек вӑрттӑн шухӑшсене килӗшӳ тума лартнӑ требованисем чӑрмантараççӗ. Вӑл килӗшӳ атомлӑ хӗçпӑшалсемпе усӑ курассине чарса лартӗччӗ, çав вӑхӑтрах, чӑннипех ӗçлекен контроль туса хума палӑртӗччӗ.

Барух планӗ е ун евӗрлӗ ытти план,—унта халӑха йышлӑн вӗлермелли хӗçпӑшалсем çинчен е хӗçпӑшалсӑрланасси çинчен сӑмах пырать-и, пурпӗрех — мӗнпур хӗçпӑшалсене шута илме тата контроль тума палӑртать, анчах çав вӑхӑтрах нацисен хӑйсен хӗçпӑшалӗсене чакарасси çинчен обязательство илмеллине палӑртмасть. Ку планӑн шухӑшӗ çапла: хӗçпӑшалсене шута илӗпӗр, тӗрӗслесе тӑмалла тӑвӑпӑр, кайран мӗн тумаллине курӑпӑр. Паллӑ ӗнтӗ, ытти обязательствӑсемсӗр çакӑн пек шутланине хальхи пек йывӑр лару-тӑрура нимӗнле те килӗшме май çук, мӗншӗн тесен ку вӑл ыранхи куна шанмасӑр тӑрассине ӳстерет. Çак план вӑй политикишӗн пур енчен те питӗ аван пулнӑ пулӗччӗ.

Хальхи вӑхӑтри тӗнчери лару-тӑрӑва палӑртакан тӗп ӗçсене пӑхса тухни çакна кӑтартса парать: тӗнчери лару-тӑру йывӑр пулнӑ вӑхӑтра конкретлӑ ыйтусене татса пама питех те хӗн. Çакӑн пек лару-тӑрура çынсене улталама тӑрӑшаççӗ. Çынсен çакӑн пек хӑрушлӑх пур: вӗсене крестовӑй поход майлӑ çавӑрма пултараççӗ.

Манӑн çакӑн пек мӗнпур çынсене тӳрех çапла калас килет: эсир мӗнле те пулин государство стройне кӑмӑллатӑр; эсир çапла шухӑшлатӑр (сире ун çинчен яланах калаççӗ): сире çӗнтерсе хӑварӑв пурнӑç йӗркине улӑштарма хушасшӑн: вырӑссем хӑйсен стройне улӑштарсан кӑна вӗсемпе калаçусем ирттерме пулать, китаецсем хӑйсем патне Формоза маршалне чӗнсен кӑна вӗсемпе калаçу ирттерме пулать.

Сирӗн шутпа мӗнле, американецсем капитализма пӗтерсен кӑна вӗсемпе калаçусем ирттерме пулать тесе калани ӑслӑ сӑмах пулӗччӗ-ши?

Мӗнпур çынсем сирӗн шухӑш-кӑмӑлӑр майлӑ пулсан кӑна мир тума пулать тесе шухӑшлатӑр-и эсир?

Ун пек мар пулсан, тӗнчери халӑхсемпе, вӗсем хуть те мӗнле çынсем пулса тӑраççӗ пулин те, тӗнче кирек мӗнле пулсан та, тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатмалли майсене шырамалла мар-и вара?

Пилӗк держава мире сыхласа хӑварассишӗн тата ӑна тӗреклетессишӗн чи пысӑк ответ тытаççӗ. Çав державӑсен представителӗсен канашлӑвне ирттерни тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатмалли чи лайӑх çул-йӗр пулса тӑмасть-и вара?

Пилӗк аслӑ державӑн представителӗсем тӗл пулччӑр. Вӗсем хӑйсен интересӗсемпе хӑйсен шиклӗхӗ тӗлӗшпе хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене каласа паччӑр. Пӗтӗм тӗнчере хирӗçӳсем кӑларакан ыйтусене сӳтсе явса, иккӗлентерекен ыйтусене татса паччӑр тата йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатчӑр.

Эпӗ пирӗн сессин тӗп задачисенчен пӗри çакӑ пулса тӑрать тесе шутлатӑп: çакӑн пек питӗ кирлӗ канашлу пултӑр тесе, чи усӑллӑ майсем тупмалла.

Пирӗн ӗç кирлӗ пек сарӑлса пытӑр тесен, кун йӗркине кӗртнӗ виçӗ ыйтӑва пӗрин хыççӑн теприне мар, вӗсем пӗтӗмӗшле çыхӑнса тӑнине шута илсе пӑхса тухни усӑллӑ пулӗ. Мӗншӗн тесен вӗсем пурте тӗп ыйтупа—тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатас ыйтупа çыхӑннӑ.

Эпӗ çакна шанса тӑратӑп: пирӗн ӗçӗн тата выводсен пӗлтерӗшӗпе результачӗсем мӗнпур этемлӗхе интереслентерекен событисен характерӗпе килӗшсе тӑрӗç.

* * *

ВЕНА, ноябрӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Сессин ӗнерхи каçхи ларӑвӗнче Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн вице-председателӗ Пьетро Ненни тухса каланӑ. Вӑл миршӗн тӑракансен паллӑ деятельне Ив Фаржа хисеплесе асӑннӑ.

Ненни çакна паллӑ тунӑ: халӑхсем тӗнчери ыйтусене чыслӑн татса парасшӑн, пуриншӗн те юрӑхлӑ килӗшӳсем тӑвассишӗн хытӑ тӑрӑшаççӗ.

Сивӗ вӑрçӑран юнлӑ вӑрçӑ пуçланса каяс хӑрушлӑх, тенӗ вӑл, халӗ, 1—2 çул каярах пулнипе танлаштарсан, пӗчӗкрех. Анчах халиччен те татӑклӑ улшӑну тесе калама май килекен нимӗнле ӗç те пулса иртмен-ха. Корейӑра мир туман, Германи ыйтӑвне татса паман, васкаса хӗçпӑшалланас ӗç малалла пырать, США Совет Союзӗ йӗри-тавра çар базисем тӑвать.

Ненни «Европӑри оборона пӗрлешӗвӗ» çинчен тунӑ договора хирӗç кӗрешме кирли çинчен чарӑнса тӑнӑ. «Европӑри оборона пӗрлешӗвне» тӑвассине хирӗç анлӑ кампани организацилемелле, тенӗ вӑл. Вӑл кампание ултӑ государствӑри халӑхсем кӑна мар, çавӑн пекех мӗнпур çӗршывсенчи мире юратакан халӑхсем те хутшӑнмалла.

Мир вӑйӗсем вӗçӗмсӗр ӳссе пыраççӗ. Азире Китайпа, Корейӑпа тата Вьетнампа пӗр кӑмӑллӑ пулас туйӑм ӳссе пырать. Африкӑри пусмӑрта пурӑнакан халӑхсем вӑрçа хатӗрленнине хирӗç, миршӗн пыракан кӗрешӗве ытларах та ытларах хутшӑнаççӗ.

СССР, Китай тата халӑх демократи çӗршывӗсем тунӑ çитӗнӳсем ӗçсыннисем миршӗн хастарлӑ тӑнине кӑтартса параççӗ. Çав çӗршывсем пире çӗнӗ вӑй кӳртеççӗ. Эпир мир тума пултаратпӑр, çавӑнпа мир ӗçне ӗненетпӗр. Хамӑрӑн кӗрешӳре эпир мӗнпур йывӑрлӑхсене çӗнтерме пултаратпӑр.

Ун хыççӑн Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн секретарӗ Жильбер де Шамбрэн тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл, тӗпрен илсен, Германи ыйтӑвӗ çинчен каланӑ.

Де Шамбрэн çакна кӑтартса панӑ: Совет правительстви Германие мирлӗ майпа пӗрлештересси тата ӑна тепӗр хут хӗçпӑшаллантарма чарасси çинчен сӗннӗ çул-йӗр мире юратакан мӗнпур халӑхсен интересӗсемпе килӗшсе тӑрать. Юлашкинчен де Шамбрэн çапла пӗлтернӗ: Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн халӑхсене Германи ыйтӑвне Совет Союзӗ панӑ сӗнӗвӗн никӗсӗ çинче татса пама май пулнине кӑтартса памалла. Унӑн çакна кӑтартса памалла: Парижра тата Бонра тунӑ договорсене йышӑнмани лайӑх результат парӗ, вӑрçӑран хӑтӑлма пулӑшӗ тата тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатасси патне илсе çитерӗ.

Англири мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗçлекен комитетӑн президенчӗ Притт хӑйӗн сӑмахӗнче çакна палӑртнӑ: Англире миршӗн пыракан юхӑм общественноçа вӑрçа хирӗç, вӑрçа хатӗрленнине хирӗç тӑратма, калаçусемшӗн тӑма нумай пулӑшрӗ. Англири уйрӑм вӑйсем хальхи вӑхӑтра общественноçа Хӗвеланӑç Германие тепӗр хут хӗçпӑшаллантарас, виççӗмӗш тӗнче вӑрçи пуçласа ярас, тӗнчери çыхӑнусенчи лару-тӑрӑва йывӑрлатас ӗçсем майлӑ çавӑрма тӑрӑшаççӗ. Анчах Англи халӑхӗн ытларахӑшӗ çакна хирӗç татӑклӑн тӑрать.

Ле Дин Там (Вьетнам) хӑйӗн сӑмахӗнче çапла каланӑ: Франци колонизаторӗсем Вьетнам халӑхне хирӗç вӑрçӑ пуçласа ячӗç. Ку агрессиллӗ вӑрçа Франци халӑхӗн интересӗсене хирӗç туса пыраççӗ. Çакна Францире пуç пулса тӑракан ушкӑнӑн представителӗсен пӗр пайӗ те йышӑнать. Корейӑра перемири туни Францине Вьетнам халӑхӗсен, çавӑн пекех пӗтӗм тӗнчери халӑхсен шанчӑкне—вӗсем Вьетнам ыйтӑвне мирлӗ майпа татса пама май пуррине шанса тӑнине тата ытларах çирӗплетрӗ.

Корейӑри вӑрçӑ, паллӑ тунӑ Ле Дин Там, перемири çинчен килӗшӳ тунипе вӗçленчӗ. Вьетнамри вӑрçа та çакӑн евӗрлӗ пӗтерни кирлӗ, çакӑн пек пӗтерме май пур.

Вьетнам ыйтӑвне тӗрӗслӗхлӗ мирлӗ майпа татса парассишӗн тӑракан Франци халӑхне тата мире юратакан мӗнпур халӑхсене хӗрӳллӗн саламласа, Ле Дин Там сесси участникӗсене çапла чӗнсе каланӑ: Вьетнамри преступникла вӑрçа чарса пырассишӗн тата малалла тӑсассишӗн тӑракан Америкӑпа Франци империалисчӗсен ӗçӗсене сивлемелле, вӑрçа чарса лартассишӗн тата Вьетнам ыйтӑвне мирлӗ майпа татса парассишӗн хӑватлӑ кампани организацилемелле.

Çакӑнпа лару хупӑннӑ.

ВЕНА, ноябрӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Ноябрӗн 24-мӗшӗнчи ирхи ларура Пӗтӗм Китайри писательсен союзӗн председателӗ, Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Бюровӗн членӗ Мао Дунь тухса каланӑ.

Вуншар миллион çынсем миршӗн пыракан кӗрешӗве активлӑн хутшӑннине пула, чи малтанах, Корейӑра перемири тунине пула, тӗнчери лару-тӑру кӑштах çӑмӑлланнине палӑртса, Мао Дунь çакна кӑтартса панӑ: США правительствин перемири тума тиврӗ, анчах вӑл тӗрлӗ майсемпе çак перемири çирӗп ан пултӑр тесе тӑрӑшать. Корейӑра перемири тунӑ хыççӑнах США Ли Сын Ман шайккипе «пӗр-пӗрин хӑрушсӑрлӑхне тӑвасси» текенскерӗ çинчен договор тунӑ. Çавна май США хӑйӗн çарӗсене чылай вӑхӑт хушши Кӑнтӑр Корейӑра тытса тӑма ирӗк илнӗ.

Корейӑра перемири туни, тенӗ Мао Дунь, тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва малалла çӑмӑллатса пыма лайӑх майсем туса пачӗ. Мире юратакан халӑхсен халӗ аслӑ державӑсем умне çакӑн пек требовани лартмалла: вӗсем хӗçпӑшалсене пӗтӗмӗшле чакарасси çинчен тӑракан ыйтусене сӳтсе явччӑр. Кунта атомлӑ тата водородлӑ бомбӑсемпе тата бактерилле хӗçпӑшалпа, çавӑн пекех халӑха йышлӑн вӗлермелли ытти хӗçпӑшалсемпе усӑ курма чарасси, ют çӗршыв территорийӗсем çинчи çар базисене пӗтересси, ют çӗршывсен территорийӗсенче вырнаçнӑ, çав çӗршывсен суверенитетне пӑсакан çарсене илсе тухасси çинчен тӑракан ыйту та кӗрет. Хальхи вӑхӑтра пилӗк аслӑ державӑн—США-н, Англин тата Францин, СССР-па Китайӑн — канашлӑвне ирттересси тӗрӗс те кирлӗ ӗç пулса тӑрать.

Паттӑр Корея халӑхӗн представителӗ Хан Сер Я хӑйӗн сӑмахӗнче çакна кӑтартса панӑ: Корея халӑхӗ хӑйӗн тӑван çӗршывӗн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, миршӗн тата пӗтӗм тӗнчери цивилизацишӗн виçӗ çул хушши пынӑ кӗрешӳре тунӑ çӗнтерӳ мирпе демократи лагерӗн аслӑ çӗнтерӗвӗ, халӑхсем хушшинче мир тӑвассишӗн тӑракан мӗнпур прогрессивлӑ этемлӗхӗн пысӑк çитӗнӗвӗ пулса тӑрать.

Корея халӑхӗ, кӑтартса панӑ малалла Хан Сер Я, США-ри реакциллӗ ушкӑнсен тата Ли Сын Манӑн сутӑнчӑкла шайккин чее те усал ӗçӗсене пӑхмасӑр, Корея ыйтӑвне мирлӗ майпа татса парассишӗн хӑйӗн пӗтӗм вӑйне хурать. Корея ыйтӑвне çитес вӑхӑтра пухма палӑртакан политикӑлла конференцире татса пама пулать, татса памалла та.

Корея халӑхӗ ячӗпе Хан Сер Я ырӑ кӑмӑллӑ çынсене миршӗн пыракан кӗрешӳре тата тачӑрах пӗтӗçме, вӑрçӑ чӗртекенсен усал ӗçӗсене ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑ шыв çине кӑларма тата чарса лартма чӗнсе каланӑ.

Сессире Илья Эренбург (СССР) пысӑк сӑмах тухса каланӑ.

* * *

Ирхи ларура пренисенче çавӑн пекех Вильгельм Эльфес (Хӗвеланӑç Германи), Токусабуро Дан (Япони), Миннерт-Кулинг (Голланди), Анежка Годинова-Спурна (Чехословаки), Говинд Сахаи (Инди) тухса каланӑ.

ВЕНА, ноябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнерхи каçхи ларура Бернал профессор (Англи) сӑмахне вуласа панӑ. Бернал сесси ӗçне хутшӑнма пултарайман.

Бернал профессор çакна палӑртнӑ: халӑхсем вӑйлӑрах та вӑйлӑрах çине тӑрса хӗçпӑшалсӑрланасси çинчен требовани лартаççӗ. Атомлӑ хӗçпӑшалпа усӑ курма чарасси çинчен Стокгольмра йышӑннӑ Воззвание нумай çынсем ырлани çавна кӑтартса парать.

Халӑха йышлӑн вӗлермелли хӗçпӑшалпа усӑ курма чарасси тата хӗçпӑшалсене чакарасси пирӗн задача пулса тӑрать, тенӗ Бернал профессор. Çак тӗллевсене пурнӑçлас тесен, пирӗн йывӑрлӑхран тухмалли çула кӑтартса памалла, мӗншӗн тесен хӗçпӑшалсӑрланасси çинчен ирттерекен калаçусем нумай вӑхӑт хушши çав йывӑрлӑхран тухаймаççӗ. Çакна туни кирлӗ: халӑхсем хӗснӗ май правительствӑсем хальхи вӑхӑтри чӑрмавсене çӗнтермелли çул-йӗре тупчӑр. Пирӗн хамӑрӑн кулленхи ӗçре хӗçпӑшалсӑрланас ӗç кирлине кӑна мар, ӑна техника енчен туса ирттерме май пуррине тата политика енчен пурнӑçлама пултарнине те кӑтартса памалла. Пирӗн çакӑншӑн çине тӑмалла: хӗçпӑшалсӑрланасси çинчен тӑракан ыйтӑва сӳтсе явмалла, дискуссире хӗçпӑшалсӑрланма кирлӗ тенӗ шухӑш никӗс пулса тӑмалла.

Юлашки вӑхӑтра пулса иртнӗ ӗçсем хыççӑн, кӑтартса панӑ Бернал профессор, хӗçпӑшалсӑрланассине пурнӑçа кӗртес тӗллевпе ӗçлемелли майсем чылай лайӑхланчӗç.

Леопольд Инфельд профессор (Польша) хӑйӗн сӑмахӗнче çакна кӑтартса панӑ: США-н та, Совет Союзӗн те водородлӑ хӗçпӑшал пур. Анчах миршӗн тӑракансен планӗсемпе вӗсен тӑшманӗсен планӗсем хушшинче уйрӑмлӑх пур. Пӗрлешӳллӗ Штатсем водородлӑ бомбӑпа çӗнӗ вӑрçӑра усӑ курма шутлаççӗ, Совет Союзӗ вара водородлӑ хӗçпӑшала сӑнаса пӑхнӑ чухне пӗр хутчен кӑна мар çапла пӗлтернӗ: вӑл малашне те çак хӗçпӑшалпа усӑ курма чарассишӗн, унпа усӑ курма чарнине мӗнле пурнӑçласа пынине пӗтӗм тӗнчипе хытӑ тӗрӗслесе пырассишӗн тӑрать.

Инфельд çакна паллӑ тунӑ: атомлӑ тата водородлӑ бомбӑпа, çавӑн пекех халӑха йышлӑн вӗлермелли ытти йышши хӗçпӑшалсемпе усӑ курма чарассине ырӑ кӑмӑлпа калаçусем ирттернипе, пуриншӗн те юрӑхлӑ килӗшӳсем тунипе кӑна пурнӑçлама пулать. Техника яланах малалла кайса аталанса пынӑ май, пулас вӑрçӑ преступлени кӑна мар, çавӑн пекех питӗ пысӑк ӑссӑрлӑх пулса тӑнине миршӗн тӑракан мӗнпур çынсен ӑнланса илме вӑхӑт ӗнтӗ, тенӗ вӑл. Халӑхсем пурӑнма пултарассин тӗп условийӗ мир пулса тӑнине халӑхсене ӗненмелле кӑтартса памалли вӑхӑт çитрӗ. Эпир, миршӗн кӗрешекенсем, оптимистсем пулса тӑратпӑр. Пирӗн оптимизм хамӑрӑн вӑйсене шанса тӑнинчен килет. Эпир ырӑ—усала, пурнӑç—вилӗме çӗнтерессине шанса тӑратпӑр. Атомлӑ энергие этемлӗхшӗн ӗçлеттерессине эпир шанса тӑратпӑр. Мир шухӑшӗ çӗнтерессине эпир çирӗп шанса тӑратпӑр.

Добретсбергер профессор (Австри) хӑйӗн сӑмахӗнче Хӗвеланӑç Германие тепӗр хут хӗçпӑшаллантарни Австришӗн хӑрушлӑх пулса тӑни çинчен каланӑ, çав хӑрушлӑх çинче чарӑнса тӑнӑ. Хӗвеланӑç Германин влаçра тӑракан деятелӗсем, тенӗ вӑл, хӑйсен агрессиллӗ тӗллевӗсем çинчен уççӑнах калаççӗ. Вӗсем Австрие каллех оккупацилеме шухӑш тытнине палӑртаççӗ.

Хӗвеланӑç Германие тепӗр хут хӗçпӑшаллантарни пирӗн çӗршыва хӑратса тӑрать. Эпир мир вӑйӗсене çав хӑрушлӑх çинчен аса илтересшӗн, тесе палӑртнӑ Добретсбергер.

Вяйне Мелтти (Финлянди) хӑйӗн сӑмахӗнче Финляндипе Совет Союзӗ хушшинчи договор Финляндишӗн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине уйрӑмах палӑртнӑ. Финлянди туслӑх çулӗпе пынӑ чухне, Финляндипе хӗвелтухӑçӗнчи çӗршывсем хушшинчи çыхӑнусем лайӑхланса пырӗç. Ку вӑл пӗтӗм тӗнчери мире тӗреклетсе пыма пулӑшӗ. Совет Союзӗпе, Китайпа тата ытти çӗршывсемпе суту-илӳ тӑвассине сарса пыни Финляндие питӗ пысӑк пулӑшу парӗ, нумай ӗçсыннисене ӗç тупса пама май парӗ. Çавна май Финляндири миршӗн тӑракансем правительство хӑйӗн кӳршисем тӗлӗшпе мирлӗ политика тытса пытӑр тесе требовани лартаççӗ, татса паман ыйтусене мирлӗ майпа татса парассишӗн тӑраççӗ.

Ун хыççӑн Швейцари представителӗ Андре Боннар профессор кӗске сӑмах каланӑ.

Хӗвеланӑç Германие тепӗр хут хӗçпӑшаллантарни, тенӗ вӑл, Швейцарин никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн хӑрушлӑх пулса тӑрать. Çавӑнпа та Швейцари халӑхӗ, «Хӗвелтухӑç енчен килекен хӑрушлӑх çинчен» саракан официальнӑй суя пропагандӑна пӑхмасӑр, Хӗвеланӑç Германие хӗçпӑшаллантарни Швейцарие хӑратса тӑнине уççӑнрах та уççӑнрах ӑнланса илме пуçлать.

Флорика Мезинческу госпожа (Румыни) хӑйӗн сӑмахӗнче çакна палӑртнӑ: аслӑ державӑсем хушшинчи калаçусене мӗнпур аслӑ державӑсем хутшӑнсан, унта малти вырӑнта тӗп ыйту—тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатмалли майсене тупасси çинчен тӑракан ыйту—тӑрсан, аслӑ державӑсем хушшинче калаçусем пулма тата вӗсем ӑнӑçлӑ вӗçленме пултараççӗ.

Юлашкинчен Мезинческу çакна кӑтартса панӑ: мире тата пӗтӗм тӗнчери хӑрушсӑрлӑха тӗреклетес тӗллевпе тӑвакан кирек мӗнле пуçарӑва та Румыни халӑхӗ татӑклӑн пулӑшса пырӗ.

* * *

Каçхи ларура пренисенче çавӑн пекех Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн членӗ Изабелла Блюм (Бельги), Греци делегачӗ Петрос Коккалис, Турци представителӗ Сертель, Андреас Пуйурос (Кипр) тухса каланӑ.

ВЕНА, ноябрӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Ноябрӗн 25-мӗшӗнчи ирхи ларура Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн членӗ Нафиси профессор (Иран) тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл Вӑтам тата Çывӑх Хӗвелтухӑçӗнчи халӑхсен никама пӑхӑнманлӑхшӑн пыракан кӗрешӗвӗ çинче чарӑнса тӑнӑ.

Хальхи вӑхӑтра Иран, Турци, Иракпа Пакистан хушшинче агрессиллӗ пакт тума палӑртаççӗ. Вӑл пакт Совет Союзне хирӗç пымалла. Иран халӑхӗ çавӑн пек агрессиллӗ пакт тума нихçан та килӗшмӗ, тесе паллӑ туса, Нафиси çапла каланӑ: Совет Союзӗ пирӗн çӗршывӑн хӑрушсӑрлӑхӗшӗн тунӑ ӗçсене эпир нихçан та манмӑпӑр. Совет правительстви пирӗн наци интересӗсене яланах хисепленӗ, вӗсем майлӑ тӑнӑ.

Трибуна çинче—Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Бюровӗн вице-председателӗ Габриель Д'Арбусье. Вӑл Хура Африкӑри халӑхсем Хӗвеланӑç Германири милитаристсен хӗçпӑшалланмалли планне хирӗç кӗрешни çинчен каласа парать.

Альберто Чанка профессор (Итали) çакна паллӑ тунӑ: тӗнчери лару-тӑрӑва йывӑрлатакан сӑлтавсенчен пӗри вӑл Пӗрлешӳллӗ Штатсен политики пулать. Вӑл политика Хӗвеланӑç Европӑра çар тӑвассишӗн тӑрать. Хӗвеланӑç Германин çарӗ çав çарӑн тӗп пайӗ пулса тӑмалла.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн чи кирлӗ задачи тенӗ вӑл, мӗнпур çӗршывсенчи общественноçа тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва çӑмӑллатассишӗн пыракан кӗрешӗве мобилизацилесси пулать.

Ун хыççӑн А. Сурков (СССР) тухса каланӑ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн сессийӗн ирхи ларӑвӗнче çавӑн пекех Эжени Коттон (Франци), Розенквист господин (Норвеги), Андреа Андреен доктор (Швеци), Абель Шермонт (Бразили), Джеймс Эндикотт (Канада), Феликс Иверсен профессор (Финлянди), Ярослав Ивашкевич (Польша), Марсель Нэр (Франци) тухса каланӑ.

Капкăн кĕтесси

Ваттисен сăмахĕсенчен

Çын алăкне кăвар туртма аван.

* * *

Хатал пахчари ĕмĕлке тĕшне те тăмасть.

* * *

Йăпăлти пăру ик ăне ĕмнĕ, тет.

* * *

Хысри çынна кĕтиччен, малти çынна хуса çит.

* * *

Вăл сылтăмпа парать, сулахайпа илет.

А. СОСНОВА çырса илнĕ.

Ӳкерчĕк айăплать

Шупашкарти «Кожупряжь» промартель атă тĕпне сăран е кожемит хурас вырăнне картон хунă, çавнашкал атăсене суту-илӳ организацийĕсене пĕрремĕш сорт тесе пама хăтланнă. Артель руководителĕсем совет çыннисене улталас çул çине тăнине тăрă шыв çине кăларнă, юрăхсăр атăсене магазинсене çитермен.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: картон хурса çĕленĕ атă тата атă пайĕсем. Сӳлте «Кожупряжь» промартель председателĕ **М. Воротилов.**

Чӳречерен пăхса

М. С. Спиридонова Н. К. Сверчков художниксене сума суса.

Пур ман пĕр художник тантăш,
Питĕ чаплă ӳкерет!
Ун килтех натура янтă —
Пăх та çыр чӳречерен.

Сулахай енне пăхсассăн,
Вăл курать çут Атăла;
Сылтăма пуçне пăрсассăн,
Куç умне тухать хула...

Мĕн туma çӳрес-ха унăн
Ахалех вăйран кайса?
Ав, паян шап-шур юр çунă —
Хатĕр хĕллехи пейзаж!

— Чим, ман хĕр çиет икерчĕ!—
Терĕ вăл пĕр ирхине;
Çав куннех вара ӳкерчĕ
Унăн çĕнĕ портретне...

А. САПСА.

Сунарçă пăхрĕ, кап! кăна
Виç «тус» çакланнă капкăна.
Вăл тĕлĕнет: «Мĕнле тавар!
Ни тилĕ мар, ни кашкăр мар»
Элекçĕ лекнĕ хĕскĕче,
Ак вăрă (унăн çумĕнче),
Ав портфелли, вăл бюрократ,
Апап! тесе хăй çухăрать.
Пуш сăмахсем çапакана,
Каç-каç вăрра каякана,
Пукан хĕртсе ларакана
Хĕсетпĕр тимĕр капкăна.

Укерчĕкне **ПЕТР СИЗОВ** тунă, сăмахĕсене **СТИХВАН ШАВЛЫ** çырнă.

Улталакан начальник

Валя Филиппова пĕр çул ытларах Элĕк районĕнчи Вырăс Сурăмĕнчи почта уйрăмĕн начальникĕ пулса ĕçлерĕ.

Чи малтанах унпа çывăх паллашма Вырăс Сурăмĕнчи вăтам шкулта ĕçлекен М. Герасимова учительницăн тӳр килнĕ. Вăл Шупашкарта вĕренекен шăлнĕ патне 100 тенкĕ укçа ярса пама шутланă.

— Халĕ квитанци кĕнеки пĕтрĕ, ыран Элĕкрен илсе килсенех çырса паратăп,—йăпăлтатса калаçнă укçа илнĕ чухне начальник.

Анчах квитанци кĕнеки нихçан та тупăнман. Çав укçана вара М. Герасимова та, унăн шăлнĕ те курман.

Юратать Филиппова укçана. Сейфри укçана тыткаланă чухне унăн аллисем чĕтренĕ.

— Мĕнле майпа çав укçана хамăн кĕсъене чикме пулĕ-ши?—кунĕн-çĕрĕн шутланă пулас вăл.

Шутланă та—майне тупнă. Пĕррехинче Татмăш ялĕнчи почтальонăн Ф. Шихранов юлташăн пĕр хаçат çитмен.

— Ал пус çакăнта пĕр хаçат çитмест тесе, эп Элĕкрен ыйтса илетĕп,—тенĕ те почта начальникĕ, ватăлнипе япăхрах куракан почтальона пĕр хут листи тыттарнă. Шихранов ал пуснă,.. анчах та хаçат çитмест тесе мар, 50 тенкĕ укçа илтĕм тесе иккен! Ал пуснă хута Филиппова вăшт! çеç туртса илнĕ.

«Укçа чул айĕнчен тухать», тенĕ ваттисем. Анчах Филиппова ăпа çăмăллăнах тупать. Пĕррехинче вăл Совет Союзĕн Геройĕн М. Ефимов юлташăн Самушка ялĕнче пурăнакан ватă амăшĕ патне пырать те процент шутласа пама тесе перекет кĕнеки ыйтать. Ватă карчăк ăнакăна пĕлмест: начальник мĕн ыйтнине пĕтĕмпех пурнăçлать. Анчах та кайран вăл хăйĕн кĕнекине вĕреннĕ çынсене кăтартать те шалтах хытса каять: перекет кассинче унăн 500 тенкĕрен 300 тенкĕ çеç юлнă.

Перекет кассине хунă укçана пĕрре ыйтнипех Филиппова нихçан та памасть.

Чăнах та «пултарать» Филиппова. Анчах та унăн Элĕкри пуçлăхĕсем те пултараççĕ вара. Ĕççыннисем Филиппова ĕçĕсем çинчен темиçе хут пĕлтернĕ пулин те, ăна тивĕçлĕ ответ тыттарман. Юлашкинчен, текех Вырăс Сурăм салинче ĕçлеттерме май килмен пирки, ăна Чăваш Сурăмĕнчи почта уйрăмне ĕçлеме куçарчĕç.

Л. ТЕРЕНТЬЕВ, Г. АЛЕКСАНДРОВ, А. ГАВРИЛОВ, М. ГЕРАСИМОВА.

Çĕнĕ конвейер

«Парти райкомĕн секретарĕсем час-часах пайсен заведующийĕсем çырса панă хут тăрăх докладсем тунă, хăйсем вара пĕр чĕрĕ шухăш та хушса каламан». (Етĕрне районĕнчи парторганизацин конференцийĕнче Петров юлташ каланă сăмахран).

Еç конвейер çинчи пек пырать.
Пай пуçлăхĕ çырать.

Машинистка çапса парать.
Секретарь докладне вуласа парать.

Г. ХАРЛАМПЬЕВ ӳкерчĕкĕ.

Мунчара

Икĕ пайлă драма

Вылянансем:

Мунча директорĕ
Кассирша
Кочегар
Мунча кĕртекен
Мунча кĕрекенсем

1-мĕш пайĕ

Çулла. Тӳсме çук шăрăх кун.
Шупашкар мунчи пуш-пушă.

Директор (кассиршăна): Ну, мĕнле, план тулать-и паян?

Кассирша: Çук, Николай Иванч...

Директор (кăшкăрса): Епле çук?!

Кассирша: Çынсем çук, Николай Иванч... Пурте Атăл хĕрринче...

Директор: Каллех Атăл! Ăçта вĕсен культура! Пулăсем пек, вĕреннĕ вĕри мунчасăр пурăнма!

Кассирша: Хĕвел çинче хĕреççĕ вĕсем...

Директор: Хĕвел çинче? (кăшкăрса). Кочегар!.. Тен, сан пăс сахал унта? Тен, çавăнпа çынсем çӳремеççĕ? Çунтар хытăрах çĕр кăмрăкне, ан хĕрхен!

Кочегар (хăюсăррăн): Эп ахаль те çунтаратăп. Анчах çĕр кăмрăкĕ хĕлле кирлĕ пулмĕ-ши?

Директор: Сан ĕç мар! Эп хам пĕлетĕп. Ту хушнипе! (Кассиршăна). Ман арăм ыйтсан, калăр—эп Атăл хĕррине шыва кĕме каятăп!

Чаршав.

2-мĕш пайĕ

Хĕл пуçламăшĕ. Мунча тулли халăх.

Сасăсем: Кассирша! Мĕншĕн билет сутмастăр?

Кассирша: Эп айăплă-им? Сутма хушман мана...

Кассирша: Ав, итлĕр мĕншĕнне...

(Мунча кĕрекенсем хытă шавлани илтĕнет).

Кассирша: Ав, итлĕр мĕншĕнне..

Шалти сасăсем: Вĕри шыв парăр! Вĕри шы-ы-ывввв! Çĕрĕпех мунчара кăпăкланса лармалла-им пирĕн?

Мунча кĕртекен. Эп айăплă мар, граждăнсем, кочегар памасть...

Сасăсем: Кайса калăр кочегара!..

Кассирша: Темиçе хут та каланă. «Эп айăплă мар, вутă чĕрĕ», тет.

Сасăсем: Мĕнле йĕрке ку? Ăçта сирĕн директор? Чĕнсе килĕр директора!

Кассирша: Директор çук... Отпускра...

Сасăсем: Тупнă вăхăт!.. вăл?! Мунчи вутăсăр, вĕри шывсăр ларать, а вăл отпускра çӳрет!

Мунча кĕртекен: Шăпланăр, граждăнсем, ан пăшăрханăр: тепĕр-ик сехетрен вĕри шыв пулать! Халь çеç «Хресчен çуртĕнчен» кивçен типĕ вутă илсе килчĕç. Халех пулать, пĕр-ик сехетренех!..

(Халăх нимĕн те шарламасть).

Чаршав.

ЧĔРЕП КУÇМИ.

Ыйтусемпе ответсем

Айăплă ручка

— Çак ӳстерсе çырса панă сводкăсемшĕн эсир, хисеплĕ юлташ, кам айăплă тесе шутлатăр?

— Ручка!

Юлташла калаçу

— Хисеплĕ писатель юлташ, Сире ялсене тухса çӳреме ырă сунатăп.

— Тавтапуç! Пит çӳресчĕ те, тухман çын тухсан тăман тухасран хăратăп.

В. УКА.

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи суту-илӳ çинчен

Мускавра кăçалхи сентябрь уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче суту-илӳ çинчен пынă калаçусем вĕçленнĕ. Кăçал ноябрĕн 25-мĕшĕнче ССР Союзĕпе Финлянди 1954 çулта пĕрпĕрне таварсем тăратасси çинчен тунă Протокол çине алă пуснă.

Протокол тăрăх, Совет Союзĕпе Финлянди хушшинче 1950 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнче пилĕк çуллăха тунă суту-илӳ килĕшĕвĕнче тата ун çумне хушса 1952 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнче тунă суту-илӳ килĕшĕвĕнче 1954 çул валли кăтартнă тавар çаврăнăшĕн калăпăшне ӳстерме палăртнă.

Финлянди Совет Союзне суднăсем, шыв тăрăх куçса çӳрекен крансем, вăрманпа хут промышленноçĕнче кирлĕ оборудовани, стандартлă çуртсем, йывăç материалсем, хут, картон, целлюлоза, штапельнăй сӳс тата ытти таварсем те парса тăмалла.

Финляндирен илекен таварсем вырăнне Совет Союзĕ Финляндие нефть продукчĕсем, хурçă прокат, тĕштырă, сахăр, çĕр мамăкĕ, автомобильсем, тĕрлĕрен промышленность оборудованийĕ, çавăн пекех удобренисем, ферросплавсем, асбест, химикатсем, пĕветмелли сăрăсем тата ытти таварсем парать.

Икĕ енĕ çавăн пекех куллен кирлĕ таварсене улăштарса тăрас пирки калаçса татăлнă. Улăштарса илекен çавăн пек таварсен хисепĕ 1954 çулта, кăçал улăштарса илнĕ таварсемпе танлаштарсан, икĕ хут ӳсет.

Финлянди Совет Союзне парса тăракан куллен кирлĕ таварсем хушшинче — сĕтел-пукан, шкулта вĕренекенсем çырмалли тетрадьсем, спорт инвентарĕ, усламçу, сыр, çăм пир-авăр пур. Ун вырăнне Совет Союзĕ Финляндие чей, хĕрлĕ эрехпе эрех изделийĕсем, пулăран тата крабсенчен тунă консервăсем, пулă вăлчи, улма-çырла, тата типĕтнĕ улма-çырла, çĕр мамăк пир-авăрĕ, фотоаппаратсем тата ытти таварсем парать.

1954 çулта пĕр-пĕрне таварсем тăратасси çинчен тунă Протокол çине Совет Союзĕ енчен СССР Тулашри Суту-илӳ Министрĕ И. Г. Кабанов, Финлянди енчен—Финляндин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ О. Гартц тата Финляндин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Суту-илӳпе Политикăлла Пайĕн Начальникĕ Г. Палмрут алă пуснă.

Хаçат-журнал сарасси мĕншĕн çителĕксĕр пырать?

Çак кунсенче эпир Асхвари «Красное пламя» колхозра пултăмăр. Колхозри ĕçсем çинчен калаçнă хыççăн, пирĕн сăмах çитес çулшăн хаçат-журнал çырăнасси çине куçрĕ.

— Эсир çитес çул мĕнле хаçат-журнал илсе тăма çырăнтăр?—ыйтрăмăр эпир.

Колхозниксенчен чылайăшĕ тĕлĕннĕ пек пулчĕç.

— Хаçат-журнал?!. Вара ăна çитес çулшăн çырăнтарма пуçланă-и?—ыйтрĕç пĕрисем.

— Вара эсир ун çинчен чăнах пĕлместĕр-и?—ыйтрăмăр татах.

— Çук, илтмен,—ответлерĕç вĕсем.

«Красное пламя» колхозра 400 киле яхăн. Унсăр пуçне ялта ял Совечĕ, колхоз правленийĕ, пуçламăш шкул, фельдшер пункчĕ пур. Апла пулин те кунта 1954 çулта илсе тăма «Правда», «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия» хаçатсене 2-шер экземпляр, районти «Коммунизмшăн» хаçата 4 экземпляр кăна çырăнтарнă.

Мĕнрен килет ку? Письмоносец начар ĕçлет-и?

— Кам пĕлет, эп те начар ĕçлетĕп пуль...—кĕскен кăна ответлерĕ пире колхозри почтальон Валентина Георгиева.

— Сана ку ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем те пулăшмаççĕ-и?

— Пулăшма каларăн... Парторганизаци секретарĕ Николай Иванч хăй те пĕр хаçат та çырăнман та... ыттисем пирки мĕн каламалли пур. Аса та илмеççĕ,—терĕ почтальон.

Çакăн пек тĕслĕхсене Канаш районĕнчи ытти колхозсенче те курма пулать. Акă, Вырăскас Пикшихри «Мотор» колхоз та, «Красное пламя» пекех, пысăк колхоз. Анчах кунта çитес çул хаçат-журнал илме çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем кăна çырăннă, колхозниксемпе колхозницăсем тата ялти ытти ĕççыннисем хушшинче вара пĕр экземпляр та çырăнтарман. Çитес çулшăн хаçат-журнал çырăнса илесси çинчен ял Совет председателĕ, вăлах пуçламăш парторганизаци секретарĕ Н. Тимофеев, ял Совет исполкомĕн секретарĕ О. Иванова, колхоз председателĕ В. Арсентьев, счетоводчĕ Л. Павлова юлташсем те пачах аса илмеççĕ.

Районти ĕççыннисене çитес çулшăн хаçат-журнал çырăнтарас ĕç питĕ çителĕксĕр пулса пырать. Ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне районĕпе «Коммунизм ялавĕ» хаçата, планпа пăхнă 450 экземпляр вырăнне, мĕн пурĕ те 128 экземпляр, «Советская Чувашия» хаçата (350 вырăнне)—125 экземпляр кăна çырăнтарнă. Районти «Коммунизмшăн» хаçата вара, 1.300 экземпляр вырăнне, мĕн пурĕ те 468 экземпляр çеç сарнă. «Çамрăк коммунист» хаçата, «Тăван Атăл» альманаха, «Ялав» журнала, «Агитатор блокнотне» тата ытти хаçат-журналсене сарасси пушшех те япăх пулса пырать.

Районти партипе комсомол, профсоюз тата ытти организацисем ĕççыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе питĕ сахал интересленеççĕ, чылай чухне политикăлла çак пысăк та кирлĕ ĕçе манăça хăвараççĕ. Чылай колхозсенче хаçат-журнал сарас ĕçре сыхăну работникĕсене пулăшма обществăлла уполномоченнăйсем уйăрман, халăх хушшинче массăлла-ăнлантарулла ĕçе туса пымаççĕ.

Чăнах та, районта халăх хушшинче хаçат-журналсем ытларах сарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекенсем çук мар. Янкăлчри почта уйрăмĕнче (начальникĕ А. Ваньк ва юлташ) кĕске вăхăт хушшинчех ялти ĕççыннисем хушшинче 250 экземпляра яхăн тĕрлĕ хаçат-журналсем сарнă. Шакăлти почта уйрăмĕнче те (начальникĕ И. Семенов юлташ) 200 экземпляр ытла çырăннă. Кунти ĕççыннисем «Коммунизм ялавĕ» хаçата 26 экземпляр, районти хаçата—110 экземпляр çырăннă. Анчах районта вĕсен лайăх опычĕпе усă курса ĕçлекенсем ытла та сахал. **С. АСЛАН.**

Выляв укçи илеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Районти перекет касси ĕççыннисене государство заемĕсем тăрăх выляв укçи нумай тӳлет.

Буинскри вăрманпромхоз шоферĕ Галахов 50 пин тенкĕ, Йĕпреç поселокĕнчи Филиппов 25 пин тенкĕ тата икĕ çын 5-шер пин тенкĕ выляв укçи илнĕ.

Г. РУСАНОВ.

Пĕлтерни

Ноябрĕн 27-мĕшĕнче, 19 сехетре. КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче парти историне вĕренмелли пĕрремĕш çул ĕçлекен кружоксен руководителĕсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Российăри социал-демократилле рабочи партине организацилени» Парти ăшĕнче большевиксен тата меньшевиксен фракцийĕсем пуçланса кайни (1901—1904 çулсем)».

Лектор—А. З. Орленко юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Тӳрлетни

«Коммунизм ялавĕн» ноябрĕн 24-мĕшĕнче тухнă номерĕнче редакци сотрудникĕсен айăпĕпе пĕрремĕш страницăри 1-мĕш фотоӳкерчĕк айне çырни йăнăш пичетленсе тухнă. Унта çырни çакăн пек пулмалла: «Краснодар крайĕ. Ăратлă сыснасем ĕрчетекен «Венцы-Заря» совхоз 30 çула яхăн ĕçлет. Çак вăхăт хушшинче тĕрлĕ республикăсенчи, крайсенчи тата облаçсенчи колхозсемпе совхозсем кунтан 74 пин ытла ăратлă сысна илнĕ. Кăçалхи çул совхоз государствăна ăратлă шултра сыснасем 3.600 пуç тата сысна ашĕ 4.000 центнер панă.

Совхозри чи лайăх свинарка А. И Дементьева хăй пăхакан 13 сысна аминчен кашниченех 23-шер çура илнĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. И. Дементьева сысна ферминче.

Е. ШУЛЕПОВ фотоӳкерчĕкĕ
(ТАСС фотохроники)».

Редактор заместителĕ **М. Н. ЯНИМОВ.**

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 27-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Виçĕ туй».

ЧАСАХ!—вырăсла спектакль «Не называя фамилий».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК» — ноябрĕн 27-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Серебристая пыль».

«ЭЛЕКТРИК» КЛУБРА—ноябрĕн 27-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Серебристая пыль».

Çырусем килеççĕ, министр сĕтелне питĕрнеççĕ...

Чăваш АССР Сутĕç министрĕн приемнăйĕнче тăватă-пилĕк çын ларать. Вĕсем министр йышăнасса кĕтеççĕ.

— Министр патне темиçе хутчен те çыртăм, анчах пĕр çыру çине те ответ памарĕ. Алтранă енне хамăн килме тиврĕ,—тет пĕр çамрăк учительница.—Кунта килсен те, ĕçе хăвăрт татса памаççĕ иккен. Кунĕпе кĕтсен те, министр патне лекме çук.

Ку учительница сăмахĕсем пĕтĕмпех тĕрĕс. Сутĕç министерствинче жалобăсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Министерствăна çырусем яракан çынсен хăйсен ыйтăвĕсем пирки РСФСР Сутĕç министерствине, партипе совет органĕсене тата хаçат редакцийĕсене çырма е темиçе çĕр километртан Шупашкара, министерствăна килме тивет.

Ĕççыннисен жалобисемпе çырăвĕсене пăхса тухасси çинчен правительство [illegible] кăларнă постановлени тăрăх, министерствăсенче, ведомствăсенче жалобăпа пыракан çынсене министерствăсемпе ведомство пуçлăхĕсем йышăнма тивĕç, жалобăсене вăхăтра тата тĕрĕс пăхса тухассишĕн вĕсем ответлă. Анчах та Сутĕç министрĕ А. Токарев юлташ тата унăн заместителĕ Н. Иванов юлташ министерствăна пыракан жалобăсемпе сахал интересленеççĕ, закон кăтартса панă пек вăхăтра пăхса тухмаççĕ.

Эпир министерствăра пулнă кун акă мĕн куртăмăр: министерство канцелярийĕнчи сĕтел çинче пĕр купа хут выртать. Çак хутсем—ĕççыннисен çырăвĕсем çине министерство панă ответсем. Хутсене пăхса тухнă хыççăн çакă паларчĕ: 121 адресна çырнă тĕрлĕрен документсем 20—25 кун хушши министерство канцелярийĕнче пăхса тухмасăр выртнă. Документсенчен хăшпĕрисем çине министр çапла çырса хунă: «çак жалобăна хăвăртрах тĕрĕслемелле», «ку ыйтупа ман пата питех те хăвăрт» çавна-çавна ярса памалла, тенĕ.

Кадрсен управленийĕн начальникĕ Абашев юлташ патĕнче жалобăсем уйăхмах нумай. Ку управление тĕрлĕрен ыйтусемпе çыраççĕ: пĕрисем—ĕç тупса пама ыйтаççĕ, теприсем—пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарма ыйтаççĕ, виççĕмĕшсем—ĕçри ситменлĕхсене кăтартса параççĕ. Анчах та Абашев юлташ учительсем хускатнă ыйтусене хăвăрт татса пама мар, вĕсен çырăвĕсене вуласа та пăхасшăн мар. Тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, Абашев юлташ патне лекнĕ 40 ытла ĕççыннисен çырăвĕ виçĕ-тăватă уйăх хушши унăн папкинче выртнă, вĕсене вăл алла тытса та пăхман.

Акă, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕнчен Советски районĕнчи Мăн Ямаш ялĕнчи шкулти учительницăн Ильина юлташăн çырăвне министерствăна ярса панă. Ильина юлташăн çырăвĕ 2 уйăх çурă ĕнтĕ Абашев юлташăн папкинче ним хускалмасăр выртать. Июнь уйăхĕнчех РСФСР Сутĕç министерстви Улатăрти сукăрсен шкулĕнчи ситменлĕхсем çинчен çырнă жалобăна ярса панă. 5 уйăх ĕнтĕ çак жалоба тĕрĕсленмесĕр выртать. Чкаловски районĕнчи учитель Думилин юлташ Чкаловскипе юнашар районa—Первомайски районне ĕçлеме куçарма ыйтса темиçе хутчен те министерствăна çырса янă, анчах унăн заявленийĕсене никам та пăхса тухман. Вара вăл хăйĕн ыйтăвĕ пирки СССР Министрĕсен Советне çырса янă. Ку заявление Чăваш АССР Сутĕç министерстви илнĕренпе уйăх иртнĕ пулсан та, заявление пăхса тухман.

Кăçалхи апрель уйăхĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Калинино районĕнчи С. учителĕн киревсĕр ĕçĕсем çинчен çырнă корреспонденцие тĕрĕслеме министерствăна ярса панă. Министерство работникĕсем çырура кăтартса панă фактсене ултă уйăх хушшинче тин тĕрĕслеме ĕлкĕрнĕ. Çак вăхăтра хаçат редакцийĕ ку çыру пирки министерствăна темиçе хутчен те аса илтернĕ. Министерство работникĕсем çырăва Калинино районĕнчи сутĕç пайне ярса панă та, ун çинчен манса кайнă, çав вăхăтрах вĕсем Калинино районĕнче темиçе хутчен те пулнă.

Сутĕç министерствин работникĕсем ĕççыннисен çырăвĕсене çухатнисем те пулнă. Кадрсен управленинче «Советская Чувашия» хаçат редакцийĕ ярса панă çырăва тем чухлĕ шырасан та тупаймарĕç.

Министерство работникĕсем ĕççыннисен çырăвĕсене ячĕшĕн çеç пăхса тухни çак фактсенчен те лайăх курăнать. Министр е унăн заместителĕ патĕнчен министерство работникĕсем патне жалобăсем хăшпĕр чухне уйăхран кăна çитеççĕ. «Крокодил» журналтан Ефимов учитель çырăвĕ килнĕ. Вăл министр патĕнчен тĕрĕслекен работниксем патне пĕр уйăхран тин çитнĕ.

Акă, Симаненко юлташ Пăрачкаври педагогика училищинче преподавательсене ĕç укçи вăхăтра паманни çинчен çырса янă. Анчах ку жалоба пирки Симаненко юлташа нимĕнле ответ та паман. Сĕмĕрле çынни Федоров юлташ хăйне интереслентерекен ыйту пирки Сутĕç министерствине икĕ хутчен çыру янă. Министерствăран вăхăтра ответ илеймен пирки, Федоров юлташ Чăваш АССР прокуратурине çырса янă. Унăн ыйтăвĕ тăрăх ответ панă тесе Сутĕç министерствин кадрсен управленийĕн начальникĕ Абашев юлташ прокуратурăна икĕ хутчен пĕлтерчĕ. Анчах та тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çакă паларчĕ: министерство Федоров юлташ патне нихçан та нимĕнле çыру та яман. Çак факт министерство работникĕсем ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине бюрократла пăхни çинчен калать.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ кăçалхи апрель уйăхĕнче Чăваш АССР Сутĕç министерстви ĕççыннисен çырăвĕсене мĕнле пăхса тухни çинчен сӳтсе явса, министерство ку ĕçе япăх туса пынине палăртнă, Сутĕç министрне Токарев юлташа хытă асăрхаттарнă. Унтанпа чылай вăхăт иртнĕ пулсан та, министерство ĕççыннисен жалобисемпе çырăвĕсене пăхса тухассине пĕртте лайăхлатман.

Ĕççыннисем хăйсем партипе совет органĕсене çыракан çырусенче тĕрлĕ ыйтусене хускатаççĕ, ĕçри ситменлĕхсем çинчен çыраççĕ, сĕнӳсем параççĕ. Çавăнпа ĕççыннисен çырăвĕсене вăхăтра тата тимлĕ пăхса тухма кирлĕ. Ку ĕçе сутĕç министерствин тĕпренех лайăхлатмалла.

П. КРЫСИН,
Чăваш АССР прокурорĕн помощникĕ.

Шупашкарти тата республикăри экрансем çинче
„Застава в горах“
ятлă илемлĕ, нумай тĕслĕ çĕнĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.
Сценари авторĕсем—Сталинла премии лауреачĕсем М. Вольпин Н. Эрдман.
Фильма лартаканĕ—Сталинла премии лауреачĕ Константин Юдин.
Композитор — А. Спадавеккиа.
РОЛЬСЕНЕ ВЫЛЯНА АРТИСТСЕМ:
В. Давыдов, М. Кузнецова, Е. Шатрова, С. Гурзо, М. Майоров, М. Касымов, В. Белокуров, О. Солюс, А. Краснопольский, Г. Черноволенко тата ыттисем те.
Ленин орденлĕ «Мосфильм» киностудийĕ 1953 çулта ӳкернĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09653 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2823. Тираж 20.000 экз.